инв. ном. ~~2972~~ 3062.
41-290

Н. И. ШЕЛЕБИ

# СĂВĂСЕМПЕ ЮРĂСЕМ

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

4
О.Т.К.

Н. И. ШЕЛЕБИ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
22 « мая 1941 г.
Подпись Ласточкин

# СĂВĂСЕМПЕ ЮРĂСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ■ 1941



## ЧӐВАШ СӐВВИ

Авал, патша пур чухне,
Пирӗн чӑваш ялсенче,
Вӑрттӑн ҫӗрте, пытанса,
Йӑвашланса, вӑтанса
Пӗр сар кайӑк пурӑннӑ —
Пит имшеркке курӑннӑ.
Ӑна чӑваш ваттисем,
Ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр,
Хӗлӗн-ҫӑвӗн ӗҫлесе,
Хырӑҫ-марӑҫ тӳлесе,
Хӗру ӗҫре, туйсенче,
Уявсенче, уйсенче
Ачашласа усранӑ.
Юнлӑ патша тарҫисем,
Ӑна сума-сумасӑр,
Ним вырӑнне хумасӑр
Кулса тӑнӑ хурласа,
Хуласене ямасӑр,
Ҫӳреме ҫул памасӑр.

Халĕ ĕнтĕ вăл кайăк
Хулара та пурăнать,
Таçти çĕршывсенче те
Вутăн-хĕмĕн курăнать.
Сасси лайăх юрлама,
Юрри хитре итлеме:
Революци ырлăхпе
Хăй тытăнчĕ питлеме,
Юрла, юрла сар кайăк,
Шăпчăк сас пек сассупа!
Санăн юнна ĕçекен
Тăшман сăнни хуçăлчĕ!
Сана ирĕк янрама
Аслă тĕнче уçăлчĕ!

# I

# ÇУЛПУÇСЕНЕ

## ЛЕНИН

Камӑн варӗнче
Ӳтленсе пулса,
Кам кӑкри сӗтне
Ҫисе ӳсрӗн-ши?
Кам чӗрҫи ҫинче
Выляса кулса,
Хӗвел шевли пек
Йӑлт-йӑлт сикрӗн-ши?
Пусмӑрлӑхпала
Ултав суяна
Ывӑҫ ҫинче пек
Курса тӑраттӑн.
Мӗнпур хурлӑхлӑ,
Асаплӑ йӑха
Вут юпа пулса
Ертсе пыраттӑн.
Вут ҫулӑмӗ пек
Чӗлхӳ-ҫӑвару—
Епле сивӗнсе

Чĕнми пулчĕ-ши?
Тĕттĕм пуçлăхĕ—
Хăрушă вилĕм—
Епле сан патна
Хăйса пычĕ-ши?
Тулли уйăх пек,
Çут сăн-сăпату
Мĕншĕн хăвăртах
Тĕксĕмленчĕ-ши?
Пурне те курса
Тăракан куçу
Епле хупăнса
Тĕттĕмленчĕ-ши?
Пĕтĕм çĕр çинчи
Ĕçхалăхĕшĕн
Сан ят чăн-чăнах
Чăн çутă çăлтăр.
Аслă, мухтавлă,
Хăватлă, чаплă
Владимир Ильич
Ульянов-Ленин,
Хĕвел çутти пек,
Яту çут пултăр,
Янтраса тăтăр,
Ĕмĕр чĕр пултăр!

## АСЛӐ ЛЕНИН

Владимир Ильич,
Аслӑ Ленин,—
Этемлӗхӗн чӑнлӑх
Хӗвелӗ!
Яту санӑн чаплӑ,
Ҫӗнтерӳллӗ
Ӗҫӳсем мухтавлӑ,
Илемлӗ.

Эс телейлӗ кунсен
Шурӑмпуҫӗ,
Мухтавлӑ ӗмӗрсен
Ҫӑлкуҫӗ.
Ленин, санӑн аслӑ
Аслӑлӑхлӑ
Чӑнлӑху ҫӗнтерет
Тӗнчере.

Пӗтӗм ӗҫхалӑхшӗн—
Атте эсӗ,—

Ĕмĕр пĕтмĕç санăн
Ĕçўсем.
Мĕнпур халăх сана
Ырă сунать,
Чĕререн юратса
Асăнать.

Коммунизм хĕрлĕ
Ялавĕпе
Аслă та мухтавлă
Октябрьте
Мĕнпур тăшмана
Эс çĕнтертĕн,
Чуралăх сăнчăрне
Çĕмĕртĕн.

Патша саманинче
Пире ялан
Тĕттĕм халăх тетчĕç,—
Виртлетчĕç.
Вĕренмешкĕн пире
Çул памастчĕç,
Патшалăхăн ĕçне
Ямастчĕç.

Эсĕ уçса патăн
Пире кунçул,
Ума хывса хутăн
Ирĕк çул...

Çак ирĕклĕх пире
Вăй парать,
Малтан мала чĕнсе
Вăл туртать.

Пуян та хаваслă,
Чаплă кунçул
Эс вĕрентнипе эпир
Тăватпăр.
Коммунизм тăвас
Ĕçре эпир
Стахановла хавас
Ĕçлетпĕр.
Чăваш çĕрĕнче те
Халĕ урăх:
Шавлать, йăлкăшать çеç
Çутă пурнăç.
Сывă пултăр аслă
Ленин çулĕ!—
Аслă Сталин чаплă
Кунçулĕ!

1939.

## ЛЕНИН ШУХĂШĔ

Санăн пуçăнти вăйлă шухăшсем,
Мĕнпур ĕççыннин вăйне çĕклесе,
Тискер капитал юнлă никĕсне
Тĕпĕ-йĕрĕпе кисрентерессĕ;
Пĕтĕм çĕр çинчи йĕркесĕрлĕхе,
Туппа пенĕ пек, ишсе пыраççĕ,
Мĕнпур ĕçхалăх ирĕклĕхĕшĕн
Хурçă шăратса никĕс хураççĕ.
Санăн хăватлă, чаплă шухăшу
Хĕвел пек çутă, çăлтăр пек çӳлте—
Пĕтĕм тĕнчипе вĕçсе çӳреме
Нимĕнле вăй та ăна чарас çук;
Пĕлĕт юхнă пек ирĕккĕн юхма
Тем пек хăват та çулне пӳлес çук,
Тем чухлĕ пысăк тинĕссем çинчен
Урлă та пирлĕ тăвăл пек çӳрет.
Тимĕр картасем, вăрмансем урлă,
Çил пек ыткăнса, çиçĕм пек кĕрет,
Этем ăрăвĕн çулне кăтартса,

Çĕре çутатса маяк пек çунать.
Пур ĕçхалăхне чĕнет пĕрлешме,
Мĕльюншар çынна çитсе вăрататъ;
Пусмăр тĕнчипе тăрса кĕрешме
Хурçă пек çирĕп вăя чăмăртать.

# СТАЛИН

Ылттăн та мар эсĕ,
Кĕмĕл те мар,
Ĕçўсем сан хурçă,
Чĕлхў—кăвар.
Ылттăнтан та хаклă,
Кĕмĕлтен те,
Çĕр çийĕнче сана
Пур тĕлте те
Лайăх пĕлсе тăрать
Пур чĕлхе те.
Эсĕ чĕре патне
Кăвар хуран,
Коммунизм çулпе
Ертсе пыран.
Мĕнпур çĕнĕ хула,
Çĕн ял, уй-хир
Сана мухтав юрри
Ĕмĕр юрлĕ.
Сана ачашласа

Ӳстернӗ вар,
Эсӗ ҫисе ӳснӗ
Ҫӑкӑр-тӑвар—
Пурте: хаклӑ, чаплӑ
Парне пулнӑ,
Санӑн чӗрӳ патне
Хурҫӑ хывнӑ.
Мӗнпур чуралӑхри
Ылханлӑ йӑх,
Пурте сана савӑть,
Пурте мухтӑть.
Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ,
Вак халӑхӗ—
Пурте санӑн тусу,
Савнӑ йышу.
Эсӗ ӗмӗр ҫирӗп,
Хурҫӑ ятлӑ,
Ӗҫхалӑх ӗҫӗнче—
Сӳнми вутлӑ.
Сан паттӑр сассупа
Тӗнче янтрӑть.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары ...

## СТАЛИНА

Ҫаклӑран та хаклӑ аслӑ Сталин,—
Ёҫхалӑхӗн ҫутӑ хӗвелӗ!
Сана пирӗн чӑваш ӗҫхалӑхӗ
Акӑ епле юрӑ халалать:

„Ҫӳллӗ тусем ҫинче ахах пӗрчи,
Ахах пӗрчи тавра ҫӗр сырли;
Ҫӗр сырлисем калӗҫӗ ҫӗр тути,
Сталин сӑмахӗсем—пыл тути.

Ахах пӗрчи хаклӑ, ҫырли тутлӑ,
Пухаясчӗ кӑмӑл туличчен;
Сталин ячӗ аслӑ, юрри чаплӑ,
Юрлаясчӗ хӑйӗн умӗнче.

Шурӑмпуҫпе шӑпчӑксем юрлаҫҫӗ—
Тӗнчен чаплӑ сӑвӑҫи пуласшӑн.
Юрӑ ӑстисем юрӑ хываҫҫӗ—
Сталин умне тӑрса юрласшӑн.

Тарай тутри енчĕксем çĕлесе,
Çĕввисене кĕмĕл тытар-и,
Вутăн-хĕмĕн тĕрĕсем тĕрлесе,
Ылттăн укасемпе сăрлар-и,

Шерепине пурçăн халаласа,
Ярапине мерчен ярар-и,
Ахах пĕрчисемпе эрешлесе
Пахалар-и аслă Сталина.

Сиктĕрмелле урапа—сăран кӳме,
Сиктерер-и мăн çул тăрăшне;
Аслă Сталин чаплă саманипе
Савăнар-и ĕмĕр тăрăшне!“

# II

# ÇĔНТЕРӰ ЮРРИСЕМ

## ЫЛТТĂН САСПАЛЛИПЕ

Союзлă республикăри халăхсен
Верховный Совет суйлавĕсем
Хĕвел пек хĕмленсе, илемленсе,
Çитрĕç капăрланса, тумланса.

Аслăран та аслă чаплă çынна—
Хĕвелрен те çутă Сталина—
Пĕтĕм ĕçхалăхĕ, чунтан савса,
Кăварлăн саламлать савăнса.

Сталин—пирĕн аслă вĕрентекен,
Ленин çулĕпе илсе пыракан,
Пусмăрта пăчланнă ĕçхалăхне
Çутă кунçул тупса паракан.

Вăл—çын та, хĕвел те, çулпуçĕ те,—
Çăлтăрсем пек çӳлте—ĕçĕпе;
Мухтавлă çĕршывăн ĕçхалăхĕ
Ăна чунтан савать, ырă сунать.

Вăл—ĕçхалăхĕшĕн хаклă юлташ,
Ватти-вĕтти ăна: атте, тет.
Юрă-сăвăпа та, юмахпа та
Ĕççынни Сталина хисеплет.

Çĕршывăн хĕрĕсем Сталин ятне—
Суйлав кунĕ çӳле çĕклеме—
Хĕрлĕ ялав питне чĕнтĕрлеççĕ,
Ылттăн саспаллипе тĕрлеççĕ.

Суйлакансем—Сталин юратакан
Ĕç паттăрĕсене мухтаççĕ,
Коммунистсемпе партире тăман
Чи лайăх çынсене суйлаççĕ.

Асларан та аслă чаплă çынна—
Хĕвел пек хаваслă Сталина—
Пĕтĕм ĕçхалăхĕ чунтан савать,
Малтан суйлать Аслă Совета.

1937.

## ХĔВЕЛЛĔ МАЙ

Ĕç уявĕ паян—Хĕвеллĕ Май.
Çутçанталăк вылять, савăнать.
Аслă çĕршыв чаплă музык калать,
Хĕвел те хаваслă кулкалать.

Пĕтĕм Совет Союз талккăшĕнче
Çĕнтерӳ ялавĕ çекленчĕ.
Рабочий, колхозник, интеллигент,
Ватти-вĕтти—пурте хĕпĕртет.

Социализмлă хулапа ял
Хĕрлĕ пиçхи çыхнă, тумланнă.
Сталинла телейлĕ, çĕнтерӳллĕ,
Хаваслă самана туяннă.

Пусмăра тĕппипех çапса ватма,
Юнлă капитала аркатма
Паян—пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхне
Пĕрлешме чĕнекен аслă кун.

Ĕç уявĕ паян—Хĕвеллĕ Май,
Пурте савăнакан чаплă кун.
Харăс-харăс сиксе ташлăр, хĕрсем,
Пурçăн тутăрсене вĕçтерсе.

Ĕççынни тĕнчипех хавхаланать,
Океан-тинĕс пек хумханать.
Орденлă республика çамрăкĕсем,
Юрлăр савăнăçлă юрăсем!

Аслă Ленин—Сталин тивлетĕнче,
Ĕçхалăхĕн чаплă ĕçĕнче
Май уйăхĕ пек чечекленсе,
Коммунизм килет хĕмленсе.

Эй, Совет Союзĕн гражданĕсем,
Пурте тухăр паян урама,
Çĕнтерӳ ялавĕсем ялкăштарса,
Хаваслăх юррисем юрлама!

## ХЁРЛЁ ÇАР КУНЁ

Хёрлё Çарӑн паттӑр ятне
Паянхи кун
Хёрлё мерчен шӑрçасемпе
Эрешлер-ха.
Хёрлё Çара хёрӳ савса,
Паянхи кун
Хёрлё ялав варкӑштарса
Уявлар-ха.

Юнлӑ мула çёмёрекен
Хёрлё Çара
Мёнпур паттӑр ёçхалӑхё,
Саламлар-ха.
Чуралӑха çапса ватнӑ
Хёрлё Çара,
Мёнпур паттӑр ёççыннисем,
Тав тӑвар-ха.

Комсомолец, пионерсем,
Паян пурте

Çĕнтерӳллĕ çĕнĕ юрă
Янратар-ха.
Колхозниксем, ударниксем,
Паянхи кун
Çĕн клубсенче шевле-çиçĕм
Вылятар-ха.

Артистсемпе ораторсен
Чĕлхисенчен
Хĕрлĕ Çаршăн хĕлхем вĕçет
Паянхи кун.
Тĕнчери пур пролетарисен
Масси паян
Хĕрлĕ Çара ырă сунать—
Хĕрӳ салам!

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн
Хурçă алли
Тискер юнлă капитала
Çапса çĕмрĕ,
Çĕр чăмăрĕн кăкри çине—
Пĕтĕм çĕре—
Социализм хумĕсене
Сарса ярĕ.

Мул хуçиллĕ патшалăхсен
Юнлă сăнни
Совет Союз чикки çине
Тапăнсассăн,—

Рабочисемпе хресченсен
Хӗрлӗ Ҫарӗ
Аҫа-ҫиҫӗм вылятакан
Тӑвӑл ярӗ!

Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑвачӗ—
Хурҫӑ крепость,
Аслӑ Совет Союзне вӑл
Паттӑр сыхлать.
Ҫавӑнпа та ӑна халӑх
Хӗрӳ савать,
Паянхи кун чаплӑ
Уяв тӑвать.
Ӗҫхалӑх государстви
Питӗ те вӑйлӑ.
Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн
Паттӑр ячӗ!
Хӗрлӗ Ҫарӑн вутлӑ-хӗмлӗ
Хурҫӑ сынни—
Сывӑ пултӑр паттӑр маршал
Ворошилов!

## ТĂВАНСЕМ

Анăçри тăвансем—
Хурăнташсем!
Украинецсемпе
Белоруссем!
Ирĕклĕ кунçулăр
Сывă пултăр,
Хĕрӳллĕн саламлап,
Ыр сунап!

Пансем сире хĕснĕ,
Мăшкăланă,
Тĕрлĕ сăлтавсемпе
Кышланă,
Чуралăх сăнчăрпе
Пусмăрланă,
Путсĕр сăмахсемпе
Хурланă.

Сирĕн тăван чĕлхĕр
Илемĕсем

Польша панĕсене
Юп пулнă.
Сире çутă кунçул
Паман вĕсем,
Пĕтерме пикенсе
Тулланă.

Йывăр ĕçпе сиртен
Тар тумланă,
Вăл тарпалан пансем
Тумланнă.
Сирĕн ывăл-хĕрсен
Куççуль юхнă,
Вăл куççульпе пансем
Мул пухнă.

Сирĕн тарпа ÿснĕ
Тырра-пулла,
Апат-çимĕçсене,
Сар тулла
Питĕ йÿне илсе,
Хакла сутса
Пуйнă спекулянтсем,
Кулаксем.

Мулпа та, тĕнпе те
Хĕсĕрленĕ,
Тĕттĕм халăх тесе
Тиркенĕ;

Йӳне ĕçлеттерсе
Халран янă,
Çаруран тăратса
Хăварнă.

Ав епле ылханлă,
Тискер кунлă
Хаяр мул хуçисен
Ĕçĕсем,
Ним айăпсăр сире
Тăпăлтарнă,
Выçлăх лачакине
Путарнă.

Анчах тăванăрсем —
Хурăнташсем,
Сталинла мухтавлă
Кунçуллă,
Кĕрешӳре вăйлă
Çĕнтерӳллĕ,
Паттăр Хĕрлĕ Çарлă,
Хăватлă.

«Тăвансен пурлăхне
Сыхлар!» тенĕ,
Молотов сăмахне
Илтсенех
Пĕтĕм Совет Союз

Талккăшĕнчен
Паттăрсем тăваллăн
Хускалчĕç.

Çулпуçсен сассипе
Çулăмланчĕç,
Океан-тинĕс пек
Хумханчĕç.
Аслати кĕрлерĕ,
Çиçĕм çиçрĕ,—
Пансене Хĕрлĕ Çар
Аркатрĕ.

Коммунистсен парти
Çул-йĕрĕнче
Ĕçхалăхĕ паттăр
Çĕнтерчĕ,
Тăвансене пансен
Пусмăрĕнчен
Тăванлă Хĕрлĕ Çар
Хăтарчĕ.

Çавăнпа тăвансем
Савăнаççĕ,
Аслă халăх ятне
Чыслаççĕ,
Хĕрлĕ Çара хĕрӳ
Юратаççĕ,

Чечексемпе хирĕç
Тухаççĕ.

Юнлă мула çапса
Аркатакан,
Çутă кунçул тупса
Паракан
Хĕрлĕ Çар ячĕпе
Хĕпĕртеççĕ,
Çăкăр-тăварсемпе
Кĕтеççĕ.

Киревсĕр пансене
Аркантарса
Çĕнтерӳ юррисем
Юрласа,
Тăвансене чаплă
Пĕрлештерчĕ
Хисеплĕ те паттăр
Хĕрлĕ Çар.

Социализмлă
Çĕршывра,
Хаваслă та чаплă
Кунçулра
Халĕ ĕнтĕ, тăвансем,
Пĕрле эпĕр
Мухтавлă пурнăç
Тăватпăр.

Сывă пултăр пирĕн
Нумай йăхла
Союзлă халăхсен
Туслăхĕ!
Сывă пултăр аслă
Иосиф Сталин,
Этемлĕхĕн чăнлăх
Хĕвелĕ!

# РЕСПУБЛИКҪЁМ, САВӐН!

*(Аслӑ Октябрӗн 20-мӗш ҫулне)*

Республикҫӗм, савӑн!
Эпир, Совет ҫӗрӗнчи
Мӗнпур нациллӗ йӑхсен
Ирӗклӗхри ҫынсем,
Октябрьти Аслӑ
Революци уявне
Уявлатпӑр чаплӑн
Ҫирӗм ҫуллӑх ячӗпе.

Пӗтӗм ӗҫҫыннисем,
Рабочисем, колхозниксем,
Колоннӑсене тӑрса,
Хӗрлӗ ялав вӗҫтерсе,
Ҫӗнтерӳллӗн, уҫҫӑн
Мухтав юрри юрласа,
Чаплӑ уява чыслама
Тухрӗҫ аслӑ урама.

Купăссăсем, кĕслеçсем,
Ушкăн-ушкăн юрăçăсем
Шăратаççĕ юрра,
Янратаççĕ урама.
Комсомол, пионер—
Çамрăк-кĕрĕм, ывăл-хĕр
Вăй вылять, хĕпĕртет
Савăнăçлă ĕмĕрте.

Октябрь хăватлă—
«Çĕнтерÿçĕ» ятлă;
Тĕнчипех çĕнтерет,
Юнлă мула çĕмĕрет.
Вăл сÿнми çиçĕмлĕ;
Ун çуттипе сисĕмлĕ,
Çĕнтерÿллĕ эпир,
Стахановла ĕçлетпĕр.

Пусмăрти йăхсене,
Мĕнпур вак халăхсене,
Чăваша та, пире,—
Çутă кунçул пиллерĕ.
Октябрь ырлăхпе,
Аслă Сталин пиллĕхпе
Эпир халь орденлă,
Тăван Конституциллĕ.

Çĕнтерÿ парнине—
Чаплă Ленин орденне

Аларан ямастпăр,
Хурçă вăйпа сыхлатпăр.
Ленинла-Сталинла,
Вĕсем уçнă çулпала
Хăюллăн пыратпăр,
Коммунизм тăватпăр.

Халь эпир колхозлă,
Пирĕн çĕршыв вăй илчĕ,—
Илемлĕ, хаваслă
Сталин самани килчĕ.
Çуллахи çăмăрсен
Пĕлĕчĕ пек хунаса,
Куллен кун йышланса,
Çĕкленеççĕ хуласем.

Ма савăнас мар халĕ
Ирĕк халăхăн, пирĕн?
Октябрь хĕвелĕ
Йăлкăшать вĕт хĕрӳллĕн!
Пурнăçăн экспресĕ—
Ленин-Сталин çулĕ çинче;
Хаваслă çутă сăн—
Ĕçхалăхĕ çийĕнче.

Пирĕн чаплă геройсем,
Сталин летчикĕсем—
Полюса çĕнтерчĕç,
Тĕнчене тĕлĕнтерчĕç.

Сталин тапхӑрӗнчи
Халӑхсен вӑйӗпе
Атӑл та Мускава
Юхма тытӑнчӗ.

Ав епле хӑватлӑ,
Ав епле тараватлӑ
Ирӗк ӗççыннисем!
Совет ывӑль-хӗрӗсем
Хурçӑ алӑпа
Стахановла ӗçлеççӗ,
Донпала Атӑла
Пӗрлештеретпӗр, теççӗ.
Ун чух кӑвак тинӗссен
Чаплӑ хурçӑ карапӗсем
Çӳрӗçӗ чашкӑртса,
Атӑл тӑрӑх ярӑнса;
Хуласем тӗлӗнче
Мӑн сасӑсем кӑларӗç,
Шупашкар патӗнче те
Çапла вӗсем чыс парӗç.
Шупашкар çумӗпе
Вутлӑ кимсем чупаççӗ,
Чӑваш республикне
Çутӑ хумсем лӑпкаççӗ...
Çитрӗ кӗтнӗ ӗмӗт—
Чугун çул та пулчӗ;
Пирӗн савӑк ӗмӗр
Машинӑпа тулчӗ!

Малашне ак кунта
Волгострой çулăмланĕ,
Пысăк шыв—Атăл та
Хурçă тум тумланĕ.
Шупашкар ун чухне
Татах хавас юрлĕ,—
Вăйлă индустриллĕ,
Нумай заводлă пулĕ.

1937.

## МАНĂН САМАХ

Патшасемпе буржуйсен
Юна ĕçсе пурнăсси,
Мул хуçипе кулаксен
Вăйсăрсенчен куласси,
Нÿхреп куçлă пупĕсен
Тĕттĕм, ултав ĕçĕсем
Пирĕн тăван çĕршывра
Çук халь, —тĕп пулчĕç вĕсем.

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Чуралăха тĕнчипех
Çĕмĕрекен этемлĕх,
Юнлă мула тĕппипех
Салатакан халăх,

Коммунизм ялавне
Тытса тăран вăй-халлăх
Манăн тăван çĕршывра
Çĕнĕ пурăнăç тăвать.

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Вăл—ирĕклĕ йăхсенчен,
Ĕçчен халăх хушшинчен
Ударниксем, паттăрсем
Чаплă çынсем çуратать.
Ĕлĕк пĕтме пуçланă
Йăхсене те вăл халĕ
Вут Октябрь хĕмĕпе
Ялкăштарать хĕвел пек.

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Аслă Ленин çĕнтерÿ
Çулне тупса панипе,
Аслă Сталин çиçĕм пек

Паттăр ертсе пынипе—
Пĕрлешӳллĕ, колхозлă,
Культурăллă, хăватлă
Аслă Совет Союзĕн
Чаплă, çутă пурнăçĕ.

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Большевиксен Хĕрлĕ Çарĕн
Паттăр çĕнтерĕвĕпе—
Хаваслă та илемлĕ,
Çĕнĕ, çутă кунçуллă,
Сталин Конституциллĕ,
Совет влаçĕн хӳттипе
Тĕнчипелех пĕртен-пĕр
Ирĕклĕ халăх эпир...

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Пирĕн Совет Союзĕ
Социализмлă,—

Пуян та вăл, аслă та,
Хăватлă та, чаплă та;
Тĕнчен улттăмĕш пайне
Вĕлкĕштерет ялавне,
Нацисен тивĕçлĕхне
Пилленĕ кашнинех...

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Фабрик-завод, хуласем
Куллен-кун ӳсеççĕ,
Пирĕн стахановецсем
Харсăр, паттăр ĕçлеççĕ.
Пĕлĕт пекех ярăнса
Самолетсем вĕçеççĕ
Тинĕссене хумхатса,
Вутлă кимсем ишеççĕ...

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Мул хуçисен влаçĕ чух
Ырă пурнăç эп курман,

Тӳре-шара йыттисем
Нисталла та çул паман.
Анчах Совет влаçĕпе
Эпĕ паттăр ĕçлетĕп,
Юрă-сăвă çыратăп,
Пысăк хисеп куратăп...

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

* * *

Чăваш республики—
Ытарайми çĕршывăм,—
Патшан тискер влаçĕ чух
Курайман вăл çут пурнăç.
Халь вăл Совет влаçĕпе,
Хăйĕн паттăр ĕçĕпе
Малти ретре, ударлă,
Çĕнтерӳллĕ, орденлă...

Çавăнпа савăнап
Тăван çĕршывпа,
Çавăншăн юратап
Тăван çĕршыва!

1936. Июль.

# ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

Пуян Урал тăвĕн
Арки вĕçĕпе
Юхать Шуçăм шывĕ[1],
Тăрна куçĕ пек;
Çуллахи хĕвелĕн
Хĕрӳ хĕмĕпе
Йăлтрать вăл илемлĕн
Çутă сăнĕпе.
Ылттăн-кĕмĕл тĕслĕ
Пуллисем унта,
Кĕтӳ-кĕтӳ пулса,
Выляççĕ чăмса.
Шуçăм пĕр енĕпе
Сарлака улăх,—
Колхозсем ĕрчетнĕ
Тĕрлĕрен выльăх;
Улăхсен çумĕпе

[1] Шуçăм шывĕ — тесе чăвашсем Шешма шывне калаççĕ.

Тĕм хура çĕрĕ,—
Тĕрлĕрен çимĕçпе
Тумланать хирĕ.
Ултшар-çичшер чулсем
Шуçăм арманĕсен,
Аслати пек кĕрлеççĕ,
Çĕре кисретсе,
Хĕрĕх-аллă çухрăм
Таврари халăх
Çакăнта пырса
Авăртать çăнăх.
Çавăнпа Шуçăмра
Ялсем ĕрченĕ,
Кулаксем те унта
Хăвăрт кĕрченĕ[1].
Карта-хура тулли
Выльăхсем пулнă,
Кĕлечĕсен пÿлми
Тырăпа тулнă.
Çарăмсан, Хăнтăрçа,
Шуçăм крепоçĕсем—
Такамсем унта
Ахаль мар тунă.[2]
Тĕнче хурахĕсен

---

[1] Кĕрченĕ—пуйма пăхнă.

[2] Ку вырăнсенче авал крепоççем пулнине кăтартакан тарăн канавсем, çÿллĕ валсем выртаççĕ.

Тискер вăрçисем
Вăл паха çĕршывра
Тем чухлех пулнă.
Темиçе хут та вăл
Аларан алла
Тĕрлĕрен халăхсен
Ирĕкне куçнă.
Вырăспа чăвашăн,
Тутарпа мăкшăн,
Ыттисен те юнĕ
Çырма пек юхнă...
Ĕлĕк-авал унта
Пăчланнă юнпа
Пăлхарсен мăрсисем,
Пӳлер патшисем.
Ӳксах Тимĕр вĕсен
Тунине хуçсан—
Вăл тутар ханĕсен
Аллине куçнă.
Хаяр Иван патша
Хансене ватсан,
Мускав улпучĕсем
Ĕмнĕ пылакне.
Чехословаксемпе
Колчак çарĕ те
Юнпала шăварнă
Шуçăм тавраше.
Хĕрлĕ Çарта пулнă

Çынсене курсан,
Тигр пек талхӑрнӑ,—
Туллантӑ урса;
Çарамаслантарнӑ,
Вутра çунтарнӑ,
Пӑшалсемпе пенӗ,
Сӑнӑпа чикнӗ;
Хӗрарӑмӗсене
Намӑслантарнӑ,
Пурлӑхне çаратнӑ,
Ачисем тарнӑ.
Тӗнче çӗмрӗлнӗ пек,
Ватти-вӗттипе
Ёсӗкле-ӗсӗкле,
Уласа йӗнӗ.
Шуçӑм тепӗр енне
Сӗм вӑрмансемпе
Ту çине ту шӑтса
Ӳснӗ ӑмӑртса.
Унта—Юманлӑхсем,
Вӗтлӗх, Туйралӑх—
Хресчен ялӗсем—
Тӗрлӗрен халӑх.
Улӑхсенче вӗсем
Çулнӑ утӑсем,
Тырӑ-пулӑ акнӑ,
Чул тусем ватнӑ,
Известка çунтарса,

Таврана сутнӑ,
Кулаксен сухальсем
Ҫу ӑшне путнӑ.
Сӑвӑ пуххи ҫине
Юрӑ ҫеммипе
Пӗр Пӑтӑ[1] ялне ҫеҫ
Илсе пӑхар-ха,
Епле авал унтан
Чиркӳсем тума
Ҫӗр ҫухрӑмри ялсем
Турттарнӑ чулсем.
Мӗнчул ҫуна ватнӑ,
Лаша амантнӑ
Ҫав путсӗр чиркӳсен
Катмар чулӗсем.
Ҫапла, халӑх вӑйне,
Ҫуне-хӑймине
Нумай ӗмӗр пупсем
Пурӑннӑ кӳпсе.
Хӗрлӗ Ҫар Советӑн
Тӑшманӗсене,
Колчак бандисене
Ҫапса ҫӗмӗрсен,—
Шурӑ офицерсем,
Чее эсерсем—
Унти вӑрмансене
Йӑва тӑваҫҫӗ.

[1] **Пӑтӑ**—вырӑсла Пута ялӗ.

Влаçа хăйсене
Çавăрса илме
Кулаксемпе пĕрле
Хĕвĕшеççĕ çĕрле.
Тĕттĕмре, вăрă пек,
Канаш тăваççĕ,
Ĕçĕсем куççуллĕ—
Юнлă пулаççĕ.
Анчах вăл эсерсен
Ылханлă ĕçне
Хĕрлĕ ялав часах
Сӳнтерчĕ пачах...
Вăл çĕршывра халĕ—
„Октябрь“ ялĕ
Колхозлă хуçалăх,
Хаваслă халăх.
Выльăх-чĕрлĕх ĕрчет,
Тырă хĕвĕнет,
„Шуçăм“ чечекленет,
Культура ӳсет:
Ешерет унта
Машинлă уй-хир,—
Сталинла кунçуллă
Паттăр ывăл-хĕр.

1938.

## АВТОНОМИ ЮРРИ

Атăл çиййĕнче,
Сăрă-Çавалта
Çуйăхнă чухне
Çĕленпе калта,—
Чăваш ĕççыннисем
Авал-авалтан
Харăс сиксе тăрса
Хулапа ялта,
Вăйлă ĕçхалăхсен
Çемьине ерсе,
Пусмăра çĕмресшĕн
Паттăр кĕрешнĕ!

Ĕçхалăх йышĕ
Тыткăнра сӳнсе,
Патшасен йӳçĕ
Хĕн-хурне тӳссе,
Нумай кунçулсем
Мул чури пулса,

Хăрушă асапсем,
Хурлăхсем курса,
Тискер мăйкăчпа
Тăнă пăвăнса,
Пуянсен, пупсен,
Лаççинче пĕтсе.
Ĕçхалăх тĕнчин
Хускалăвĕнчи
Хăрушă юн çинчи

Пăлхавĕсенче,
Пугачевпа Разин
Çар халăх(ĕ)сенче,
Граждăн вăрçинчи
Çĕнтерӳсенче
Чăваш ĕççыннисем,
Хĕрлĕ хĕмленсе,
Тăвăл пек хускалнă
Харăс çĕкленсе.

Çын юнне сăхса,
Янтине чыхса,
Кӳпсе вăй илнĕ
Тискер тăшманпа
Нумай ĕмĕрсем
Вăйлă кĕрешсе,
Чăваш ĕçхалăхĕн
Хăвачĕ чакса,
Чухăна юлса

Пуранн̆ӑ сӳнсе
Ылханлӑ ятсем,
Мӑшкӑлсем илтсе.
Капитализмлӑ
Тискер йӗркеллӗ
Пуян хуҫасен
Наци политикӗ,
Тӑван мар йӑхсене
Пӗтерес тесе,
Паха ҫӗршывсене
Ирӗксӗр илсе,
Ҫӗрулпучӗсене
Парса вӗсене.
Пӗтерме пикеннӗ
Вак халӑхсене.

Чӑваш ӗҫхалӑхне,
Унӑн чӗлхине
Ҫӗр чӑмри ҫиййӗнчен
Ҫухатас тенӗ.
Темиҫе ӗмӗрсем
Тӗрлӗ майсемпе
Пӗтерме пикенсе
Хӗснӗ, хӗненӗ,
Унӑн сывлӑхне те
Сахаллантарнӑ,
Ӗрчес енӗпе те
Каялла янӑ,

Куççене хупласа
Тăлласа тăнă,
Тискер кайăксен
Вырăнне хунă,
Çурма кайăкла
Чăвашсем, тесе,
Пĕтĕм тĕнчипеле
Тискер ят сарнă,
Çуркунне яхăн
Чăваш сывлăхне
Хăрушă чир-чĕрсен
Ăшне путарнă.

Аслă Октябрь
Революцийĕ
Пуян хуçасемпе
Çĕрулпучĕсен
Тискер йĕркисене
Çапса çĕмĕрсе,
Пирĕн çĕр çийĕнчен
Сирпĕтсе ячĕ,
Ĕçхалăх йышне
Пĕтĕм тĕнчипе
Коммунизм патне
Çул тупса пачĕ,
Граждăн вăрçисен
Çулăмĕ çинче
Хĕмленсе çитĕннĕ
Совет влаçĕ

Пĕтĕм ĕçхалăхĕпе
Вак халăхсене
Наци тивĕçлĕхĕпе
Ирĕклĕх пачĕ.
Пусмăр танатилĕ
Ылхан мăшкăлне
Вĕсен çийĕнчен
Вăркăтса ячĕ.

Социализмлă
Совет Союзĕн
Хăватлă ирĕклĕ
Ĕççыннисемпе
Чăваш ĕçхалăхĕ
Пĕрле пикенсе
Çĕнĕ çутă пурнăç
Тума тытăнчĕ.

Пин те тăхăр çĕрĕн
Çирĕммĕшĕнче,
Июнĕн çирĕм
Тăваттăмĕшĕнче
РСФСР правительстви
Йышăннă тăрăх,
Чăваш Автономи
Çуралса тухрĕ,
Чăваш ĕçхалăхĕн
Кунçулĕ çине

Ҫӗне ҫута хӗвел
Ҫутӑлса пӑхрӗ.

Чӑваш ӗҫхалӑхӗ
Наци тивӗҫлӗхне
Пӗтӗм ӗҫхалӑхпе
Пӗртанах илсе,
Социализмлӑ
Совет Союзӗн
Пуян та аслӑ
Ҫӗршывӗ ҫинче,
Ӗҫхалӑхӗн вӑйлӑ
Пӗрлешӗвӗнче,
Пӗр ҫемье майлах,
Тӑвать ҫут тӗнче.
Ӗҫҫыннин колхозлӑ,
Пӗртен пӗр чаплӑ,
Хӗрлӗ ялавлӑ
Патшалӑхӗнче
Пур ӗҫҫыннисен те
Пӗр пек танлӑхне,
Пӗтӗм наци йӑхӗ
Пӗр тӑванлӑхне,
Сыхласа тӑмалли
Мухтавлӑ ӗҫре,
Чӑваш ӗҫхалӑхӗ
Хастарлӑ ӗҫлет.

Культурлӑ, ҫутӑ,

Чаплă пурăнăç,
Хĕвел пек хĕмленсе
Ўснине курса,
Чăваш республикин
Мĕнпур ĕççынни,
Пролетар массипе
Тачă çыхăнса,
Амăртса ĕçлесе
Пурăнассине
Чăваш ĕçхалăхĕ
Хытă асăрхать.

Пур енĕпе те
Паттăр пыракан
Совет Союзĕн
Ĕçхалăхĕсем
Чăваш ĕçхалăхне
Пулăшнипе çех
Чухăна юлнă
Чăваш ĕççынни
Çĕнĕ çутă пурăнăç
Тума пултарчĕ,
Чуралăх сăнчăрне
Çапса çĕмĕрчĕ.
Социализмлă
Республик туса
Коммунизм çулĕпе
Илсе пыракан
Совет Союзĕн

Ĕçхалăхĕсен
Пролетариллĕ
Çемьине кĕрсе,
Ăмăртса ĕçлесе
Пĕрле пурăнма
Чăваш ĕçхалăхĕ
Хытă тăрăшать.

Пĕтĕм çĕр çиййĕнчи
Пролетари тĕнчи
Пĕрлешсе тумалли
Революцие—
Социализмлă
Совет Союзĕ
Вăйлă крепăç
Вырăнне пулса,
Çĕнтерӳ ĕçĕнче
Вăй-хăват парса,
Хăй хӳтĕлĕхĕнче
Сĕткен ĕмĕртет.
Вăл хурçă крепăçе
Хӳтĕлес ĕçре
Пĕтĕм вăй-халпа
Пулăшу пама
Октябрь ывăлĕ—
Чăваш республик
Яланах мĕнпур
Хăватне хурать,
Хăюллăн, паттăр

Сыхласа тăрать,
Социализмлă
Çулпала пырать.

Ĕçхалăхĕн вăйлă
Çĕнтерĕвĕпе
Ăмăртса хĕмленнĕ,
Хавас, илемлĕ
Чăваш автономи
Çĕнтерӳ юрри
Авалхипе хальхи
Самана пирки
Хăюллăн, уççăн
Каланă хыççăн,
Юлашкинчен тата,
Çапла хĕмленет:

Панулми пахчи пек
Чăваш республики
Çулйĕр ĕçĕнче
Совет Союзĕн
Хĕрлĕ хăми çинчи
Паттăрĕ пулчĕ.

Пĕтĕм ĕçхалăхĕн
Аслă çулпуçĕ,
Мухтавлă колхозник
Юлташ Сталин
Ленин çулĕпе

Илсе пынипе,
Колхозникăн вăйлă
Хурçă аллипе,
Социализмлă
Çутă кунçулĕ,
Чаплă та илемлĕ
Самана килет.

* * *

Хаклă юлташсем,
Çамрăк-кĕрĕмсем!
Хресчен ял-йышсем,
Ывăлсем, хĕрсем!

Ку пятилеткăра
Ĕçхресченсен
Колхоза кĕмесĕр
Юлмалла мар,
Вăл, пуç çинчи ĕçе,
Хăвăртрах тăвар!
Тата та çивчĕн
Ĕçе тытăнар!

Пирĕн лайăх пурнăç
Хамăртан килет,
Ударлă ĕçлеме
Пĕлнинчен пулать.

Ĕмĕр ĕçре писнĕ
Хастар чĕресем!—
Çутă пурăнăçшăн
Паттăр кĕрешер.

Саккун тунă çĕрте
Ĕçлекен сынсем
Халĕ ĕнтĕ пурте
Хамăр шаннисем.

Хальхи саккунсене
Пуринчен малтан
Пирĕн йышăнмалла
Ашă кăмăлтан.

Влаç та хамăрăн,
Саккун та çаплах,—
Чăрмавсене харăс
Çĕмĕрер çапса!

Коммунистсен партии
Çĕнтерӳ парни—
Чăваш республики те
Пур ĕнтĕ пирĕн.

Вăл тĕнче çиййĕнче
Ĕнтĕ паллă ят,
Халăхсен хăватне
Лайăх палăртать.

Уншăн хыт савăнать
Чăваш ĕçхалăх,
Хĕпĕртет, мухтанать
Вăл ĕнтĕ халĕ.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн
Ĕççыннисемшĕн
Государство тытăмсен
Уçă алăксем.

Социализмлă
Ĕçхалăх йышĕн
Чаплă хулисем те
Чĕнеççĕ ăшшăн.

Культурлă пурнăç
Тăвас ĕçре те
Ударлă пирĕн ĕç—
Малти ĕретре.

Тĕрлĕрен ăслăлăх,
Ĕçпе ăсталăх
Хĕвел пек хĕмленсе
Ӳссе çитĕнет.

Искусство ĕçĕ те
Хăюллăн ӳсет,
Радио хумĕпе
Çиçĕм пек вĕçет.

Тĕнчери чи чаплă
Экрансем ҫинче
Выляҫҫĕ хĕрӳллĕн
Артистсем пирĕн.

Вĕреннĕ чăваш халь
Ҫăлтăр пек ĕрчет,
Совет пире хĕрлĕ
Ялавпа чĕртет.

Пролетарисен паттăр
Ҫĕнтерĕвĕпе
Хурҫăланчĕ пирĕн
Ҫĕршывпа уй-хир.

Чăваш ĕҫхалăхĕн
Ҫĕнтерĕвĕсем—
Пурте вĕсем пирĕн
Октябрь парни.

Иккĕмĕш пятилетка
Планĕ ҫинче
Хĕвел пек йалкăшать
Пирĕн ҫут тĕнче.

Социализмлă
Чаплă пурнăҫшăн
Чăваш республики
Паттăр кĕрешет!!!

* * *

Савăн, хĕрӳ савăн.
Республик паян!—
Паянхи кун санăн
Савăнăçлă кун.

Паян паллă кун,
Историллĕ кун—
Чăваш автономи
Шăтса тухнă кун.

Савăн, ташла паян,
Хĕрлĕ Шупашкар!..
Эсĕ халь çăхансен
Ирсĕр йăви мар.

Автономи çулĕ
Çутă кунçуллĕ,—
Социализмлă
Пурнăç çулĕ вăл.

Шавла! кĕрле паян,
Çĕнĕ Шупашкар!
Эс ĕнтĕ пуянсен
Пусмăр чури мар.

Юрла, юрла паян
Çĕнтерӳ юрри!—

Паянхи кун санăн
Çĕнтерӳ кунĕ.

Культурăллă, хитре,
Çутă пурăнăç
Чăваш ывăл-хĕрне
Октябрь пачĕ,

Чăваш çĕршывĕнчи
Промышленнăç—
Индустри хăвачĕ
Çапла çуралчĕ.

Автономи тĕнчи
Çулăмĕ çинче
Хурçăлă çул-йĕр
Куртăмăр эпĕр.

Çавăнпа паян
Чăваш ĕççынни
Чаплă уяв тăвать...
Хĕрӳ савăнать!

Кĕрешӳре çĕннĕ
Хĕрлĕ ялавсем
Хĕвел пек хĕмленсе
Выляççĕ паян.

Чăваш Автономи—
Çĕнтерӳ парни,

Аслă Октябрĕн
Пиллĕхпе пулнă.

Пролетарисен вăйлă
Çĕнтерĕвĕпе
Хĕмленсе çуралнă
Вăл çутă çăлтăр.

Колхозсен ӳсĕмпе
Килет хĕмленсе
Коммунизм—чаплă
Самана—чăнлăх!

Автономи кунĕ—
Сталинла кун.
Çавăнпа уявĕ
Чаплă ун,

Акă мĕншĕн халĕ
Паян пирĕн
Çĕнтерӳ ялавĕ
Вылять хĕрӳллĕн.

Большевиксен çулĕ
Çĕнтерӳллĕ,
Ирĕклĕ аслă çул
Хаваслă.

Сӳнме патне çитнĕ
Халăхсене

Чĕртсе çутă кунçул
Пачĕ вăл.

Автономи хурçă
Никĕсĕнче
Халăхсем туянчĕç
Çут тĕнче,

Ĕçхалăхĕ çапла
Çутă курчĕ,
Чуралăха çапса
Çĕмĕрчĕ.

Ирĕклĕ пурăнăç
Ахах тĕслĕ,
Автономи хурçă
Никĕслĕ.

Сталинла Конституци
Статьисенче
Ылттăнпа çырăннă
Ун ячĕ.

Совет Союзĕ аслă,
Ĕçĕ чаплă,
Чăнлăхпа çĕнтерет
Тĕнчере.

Халăхсем тăванлă,
Хурăнташлă,

Сталинла телейлĕ
Кунçуллă.

Октябрь çулĕпе
Чăнлăх килчĕ,
Пурăнăç илемпе
Витĕнчĕ.

Культура, искусство
Чаплăланчĕç,
Шурăмпуç çуттипе
Çуталчĕç.

Республикăсем май пек
Чечекленчĕç,
Орденсен хĕмĕпе
Çуталчĕç.

Хуласем сасартăк
Çитĕнеççĕ,
Пĕлĕте кармашса
Ÿсеççĕ.

Хапрăк-савăтсем те
Çавăн пекех
Ударлă ĕçлеççĕ
Союзпех.

Социализмлă
Республиксен

Телейлĕ кунçуллă
Халăхсем.

Мухтавлă çĕршывлă
Уй-хирсен
Амăртаççĕ хурçă
Ăйрисем.

Совет Союзĕнче
Çапла эпĕр
Пур халăх та хĕрӳ
Ӳсетпĕр.

Чăвашсем те хăвăрт
Çитĕнеççĕ,
Стахановла паттăр
Ĕçлеççĕ.

Аслă шкулсенче
Çамрăкĕсем
Туянаççĕ çутă
Кунçулсем,

Отличниксем пулса
Вĕренеççĕ,
Хаваслă пурăнăç
Клеççĕ.

Пӗтӗм тӗнчипех те
Радио-хумсем
Шăратаççӗ чăваш
Юррисем.

Акă мӗншӗн эпӗр
Хӗпӗртетпӗр
Сталин тивлечӗпе,
Ӗçӗпе.

# III

# СУМА СУСА

## МАКСИМ ГОРЬКИЕ[1]

Мăн тинĕс пек аслă
Чаплă шухăшпа,
Океан пек анлă
Хăватлă ĕçпе,
Пĕтĕм ĕçхалăхшĕн
Эсĕ тĕнчере
Хĕвел пек йăлкăшан
Хĕрлĕ хĕмпеле.

Çĕнĕ çутă сăнлă
Çĕршывăмăрта
Коммунизмăн хĕрлĕ
Ялавĕ пулса,
Кăварлă чĕлхепе
Хĕрӳ çулăмпа
Çунатăн хĕмленсе
Чаплă çутăпа.

---

[1] Ку поэмăна Шелеби М. Горький виличчен çырнă.

Ватă, ĕçре пиçнĕ
Хурçă чĕрепе,
Пролетари çĕнтернĕ
Çĕнĕ тĕнчере
Пусмăра çĕмрекен
Ударлă ĕçпе
Шурăмпуç çăлтăрле
Вылятăн çўлте.

Эсĕ кив Раççейри
Виç революцин
Вучаххи çинче те
Çиçĕмле çиçнĕ;
Ĕçхалăх массин
Хĕрлĕ хĕмĕпе
Тăвăллă йыхрав сан
Тĕнчипех вĕçнĕ.

Ĕççыннин илемлĕ
Паттăр чĕлхипе
Хăватлă сисĕмлĕ
Ăслăлăх çемми—
Сан чĕрў патĕнче
Хĕмленсе йўççе,
Тĕнчери чăн çўллĕ
Тусем пек ўснĕ.

Патшасен хĕн-хурлă
Ирсĕр самани,

Киревсĕр, ылханлă,
Путсĕр курăнса,
Юнлă, куççуллĕ
Тискер хум пулса,
Çапăнса саланнă
Санăн умăнта.

Эс пĕтĕм тĕнчери
Пролетари массин,
Пĕтĕм çĕр çийĕнчи
Ĕçхалăх чĕрин
Кĕрешӳре çĕннĕ
Мухтавлă юрри.
Тĕнчипех яту сан—
Аслă океан.

Ĕçхалăхĕн чаплă
Çырулăхне эс,
Хăватлă та аслă
Çулпуçĕ пулса,
Социализмлă
Çутă кун-çула
Çĕнтерӳ çулĕпе
Пыратăн илсе.

Коммунистсен партин
Хĕрӳ ĕçĕнче,
Çиçĕм пек çивĕч
Ăслăлăхсенче,

Коммунизм тăвас
Мухтавлă ĕçре
Хĕрлĕ ялав йăтса
Çĕклентĕн çӳле.

Темиçе çĕр тĕслĕ,
Тĕрлĕ чĕлхеллĕ
Халăхсен илемлĕ
Çырулăхсене
Социализмшăн
Кĕрешес ĕçре
Çĕн сĕткен кĕртсе,
Пыратăн ертсе.

Аслă Октябрĕн
Аслă çулпуçĕ
Хĕвел пек йăлкăшнă
Ленин юлташ та
Ахаль мар çав сана
Чĕререн савса:
Горький—пролетарлă
Писатель, тенĕ.

Пĕтĕм ĕçхалăхне,
Колхозниксене
Социализмлă
Пурăнăç патне
Ертсе пыракан
Аслă Сталин та

Хĕрӳллĕн пахалать
Санăн талантна.

* * *

Октябрь илемлĕ
Çырулăхĕнче
Хĕвел пек хĕмленнĕ
Мухтавлă юлташ,
Шурăмпуç çăлтăрĕ,
Вĕри çăлкуçĕ—
Сывă пул, хастарлă
Литература çулпуçĕ!

Мана эс пĕлместĕн,
Эпĕ путĕш çын,
Чăваш ĕçхалăхĕн
Ватă сăвăçи.
Хĕвел çутти таçта
Çухалнă манран.
Уйăх та çаплах
Курăнмасть мана![1]

Çăлтăрсем те сӳннĕ
Куçăм умĕнче,
Тĕттĕмпе витĕннĕ
Маншăн çут тĕнче.

---

[1] Шелеби хăй куçĕсем сӳнни çинчен калать.

Çиçĕм çиçнине те
Туймастăп эпĕ,
Çутçанталăк маншăн
Пачах çухалнă.
Çапах та чĕремре
Вут-хĕм йăлкăшать,
Мухтавлă ĕçсемшĕн
Сăвă шăранать.

Пĕтĕм ĕçхалăхĕн
Чĕрипе пĕрле
Октябрь хĕмĕпе
Çунать ман чĕре.
Социализмшăн
Кĕрешес ĕçре
Паттăр юрăсем те
Юрлатăп хитрен.

Халĕ сана эпĕ
Хам пекех тепĕр
„Чухăн Ваçук" çинчен
Пĕлтерес тетĕп.

* * *

„Унне авал çăткăн
Тĕнче çăханĕсем
Яланах пит-куçне
Куççулĕпе çунă.

Вăл ӳснĕ çĕрте
Пусмăрлăх вăйпе
Хуласем, ялсем
Юнпа çăвăннă.

Тĕнче ăслăлăхне
Ан пĕлччĕр, тесе,
Унти ѐçхалăхне
Мулпа хĕстернĕ.

Чухăна, мĕскĕне,
Çара ӳт çинчен
Вырттарса çаптарса
Куланай илнĕ.

Çапла вăл çĕрте
Юнлă сăнчăрпа
Тем чухлех ĕрченĕ
Суккăрпа чура.

Хăрăк-харăк ватă
Ака-сухапа
Сывлăхсене ватнă
Çамрăк кĕрĕмсем.

Шăйрăксенче ӳснĕ
Уссăр хытхура,
Тăвăлсем хаяррăн
Çухăрнă „хурах“.

Уяр çулсем пулсан—
Хирсем хуп-хура,
Хĕвелпеле çунса,
Выртнă хурланса.

Анисем çийĕнче,
Вĕри çĕленле,
Çавраçил шăхăрса
Çўренĕ урса.

Унта, пурнăç çапла
Пăнтăхнă чухне,
Василий Иванчă
Пурăннă йўçсе.

Мул хуçисем ăна
Лайăх паллană,
Пурте вĕсем унпа
Тискер палкана.

Вăл урампа иртсе
Пынине курсан,
Лавкаçăсен куçсем
Чарăлсах кайнă.

Хирĕç чупса тухса,
Пуççене ухса,
Синкерлĕ куçсемпе
Çĕлен пек пăхнă.

— Эй, Василий Иванч,
Мĕн кирлĕ сана?
Кил, кил, хăвăртрах ил,
Хам парам, тенĕ.

Эпĕ сана пĕлеп,
Лайăх çын,—тесе,
Вăр-хурах чĕлхипе
Ĕмнĕ сĕлеке.

Киревсĕр лавкине
Çавăтса кĕрсе,
Вăйпалах илнĕ
Укçине унне.

Кулач сутакан та,
Вăл çынна курсан,
Ларнă çĕртенех
Сирпĕнсе тăнă!

Тутине чĕлхипе
Çулакаласа,
Çĕленсен сăннипе
Сăхма пуçланă.

Вăл пĕчĕк çĕршывра
Хĕрлĕ улмапа
Сарă мăйăр та
Тем чухлех пулнă.

Пылпа та, çупа та
Чĕрессем тулнă,
Василий Иванчăн
Нимех те пулман.

Ачаран пуçласа
Ватăличченех
Пурăннă пăчланса,
Хĕн-хурта çунса.

Кулаксен, пуянсен
Тарçисем пулса,
Çӳренĕ бурлакра
Унăн çемьисем.

Çамкисем çиййĕнчен
Шăна хăратса,
Çăкăр татăк пухнă
Ывăльсем, хĕрĕсем.

Мăйран хутаç çакса,
Килĕрен киле
Çӳренĕ кĕленсе
Турă кĕллипе.

Хăй вăл яланах
Тарçăра пулнă.
Кулаксем ăна
Туланă хаяррăн.

Кивӗ ҫӗтӗк сӑхман
Унӑн ҫиййӗнче
Ҫакӑнса ҫӳренӗ
Хӗлӗн-ҫӑвӗнех.

Урине тӑхӑннӑ
Лапсӑркка чӑлхи
Ҫӗтӗлсе пӗтиччен
Ҫӑвӑнман нихҫан.

Кӗпи ҫухисем
Сӑмала пулса
Татӑлса аниччен
Ҫӳренӗ хытса.

Ывӑлӗ ун, Ваҫук,
Вунӑ ҫула ҫитсен,
Килтен тухса тарса,
Пурӑннӑ ҫӗтсе.

Ват кӗтӳҫе ерсе,
Кӗтӳсем кӗтсе,
Ҫӳренӗ шапарса,
Макӑрса, кӳтсе.

Пушши вӑрӑм пулнӑ,
Ваҫук пӗчӗкҫӗ,
Нумай куҫҫуль юхнӑ
Ҫав мӗскӗн ачан.

Усал кунсем пулсан,
Сыснисем тарнӑ,—
Ватӑ кӗтӳҫ ӑна
Ялан чуптарнӑ.

Чупмасан—Ваҫука
Чӑмӑр тыттарнӑ,
Ҫавӑнпа вӑл унтан
Сибире тарнӑ.

Вӗсен хӑрӑк пӳрчӗ
Тӑван ял вӗҫне,
Тылапуҫҫи ҫине
Пӗкӗртнӗ пуҫне;

Хырӑмӗ йӑтӑнса
Ан тухтӑр тесе,
Ӑна квапаран
Тӗревсем пенӗ.

Картишне пӗтӗмпех
Вӗлтӗрен пуснӑ,
Ҫенӗкӗ ҫине те
Мӑянсем шӑтнӑ.

Йывӑрлӑхсем хӑрса
Татӑлса аннӑ,
Маччаран ӳксе,
Тӗнӗрен тухнӑ.

Лупасси ҫийӗнче
Шӑши кӗтӳсем,
Туннелсем хывса,
Акатуй чупнӑ.

Ҫилпеле ҫапӑҫса,
Шӑммине хуҫса,
Ҫил хапхи ҫухӑрнӑ,
Ҫӑварне карса.

Картисен вӗрлӗкӗсем,
Тӑвӑлпа ванса,
Юписен хушшине
Ишӗлсех аннӑ.

Ҫӗмӗрӗлнӗ кантӑксен
Шӑтӑк куҫсене
Хуппала сапласа
Сивве хупланӑ.

Вӗсен пӗчӗк шӑтӑк—
Ҫурӑкӗсенчен
Шӑхӑрнӑ сивӗ ҫил,
Улесе йӗрсе!

Вӗчесӗр алӑкӗ
Сӑмсине уснӑ,
Мунчала хӑлӑпӗ
Татӑлса тухнӑ.

Тискер сăхă тăман
Ашкăннă чухне,
Çын ĕçне ĕçлесе
Ывăннă хыççăн,

Унăн икĕ хĕрĕ—
Анукпа Верук—
Çурçĕрте автан
Авăтса ярсан,

Кантăксен хăрушă
Куçсенчен тарса,
Кутник сакки çине
Кив чаппан сарса,

Пуç айне кив кирĕк
Тумтирсем хурса,
Йĕкреш пек çăттăн
Çыпçăнса выртса,

Çывăрнă çÿçенсе,
Чăпта витĕнсе,
Хăрушă тĕлĕксем
Курса—тĕлленсе.

Кашкăр пек уланă
Сăхă çил тăман,
Чĕрĕп пек хутланнă
Мĕскĕн ик тăван.

Тымарсем тӑрӑх ҫех,
Вӗри ҫӑлкуҫ пек,
Ҫиҫӗмле вылянӑ
Хӗрӳ юнӗсем.

Амӑшӗ—Матрине—
Кӑмака ҫинче;
Сӑмахӗ ҫӳренӗ—
Качаки ҫинчен.

— Урсах карӗ ӗнтӗ
Кӗҫӗр тӑманӗ,
Епле тӳсет-ши ман
Качакам,—тенӗ.

Ҫапла ӗнӗрлесе
Тӗлӗрнӗ хыҫҫӑн,
Хӑрушӑ тӗлӗкпе
Хупӑннӑ куҫсем.

Кивӗ ҫатан картан
Ҫӗтӗкне пӑхса,
Шур качаки, мӗскӗн,
Макӑрнӑ вӗсен.

Унӑн виҫӗ пӳтекки
Тайӑлнӑ пӳртре,
Пӗрне-пӗри тӗксе,
Вылянӑ сиксе.

Анукпала Верук
Çине те вĕсем
Тĕпĕртетсе пырса
Сикнĕ, ăссăрсем.

Хаяр сивĕ пăвса
Илме пуçласан,
Кăмакана кĕрсе
Выртнă хутланса.

Амăшĕ вĕсен
Çав тискер каçсенче
Айне хурса выртнă
Пĕççи-каççине.

Çапах та вăл темшĕн
Сиксе чĕтренĕ,
Шăлсене шаккаса:
Ме-е-е-к,—тенĕ.

Вăл сасса кашкăрсем
Тахçанах илтнĕ,
Вĕсене музык пек
Хитрен илтĕннĕ.

Пĕр тĕттĕм, хăрушă,
Тискер каç ăна
Кашкăр асав шăлĕ
Çавăтсах кайнă.

Ун чухне качака
Юлашки саспа
Çухăрнă каçăрăлса
Мĕнпур хăватпа.

Ăна уншăн кашкăр
Пушшех çиленнĕ:
— Качака ан кăшкăр,
Çиетĕп,—тенĕ.

— Ан çи, тискер кашкăр,
Тăранми хырăм,
Пурăнма кун çул пар,
Яр мана, яр!

— Ямастăп, качака,
Ан кар çăварна!
Сана ярсан, эпĕ
Выçă вилетĕп.

— Яр, яр, кашкăр, яр,
Чухăн Ваçукшăн;
Эпĕ паха юр-вар
Мĕскĕн çемьешĕн.

— Эс те маншăн çаплах—
Паха качака;
Ман юратнă апат—
Юнпа какай çав.

— Яр мана, юнлă куç,
Сĕмсĕр карланкă,
Хăрушă тискер пуç,
Ĕмĕтсĕр хырăм!

— Ытлашши ан палка
Путсĕр сăмаха,
Хыптарса çăттарăн
Халех хăвна ху...

— Эп сана нихçан та
Нимех те туман,
Мĕншĕн эсĕ мана
Хыпса çăтасшăн?!

— Мăйракусем ылттăн,
Сухалу пурçăн.
Тĕнчере те çук пуль
Сан пек „ырă“ чун.

— Ылттăн мăйракасен
Тĕпĕсем хурçă;
Асту, шăлусене
Пĕтĕмпех хуçăп!

— Юну тутлă шерпет—
Чĕрене хĕртет,
Саншăн, тусăм, эпĕ
Чунтан хĕпĕртеп.

— Эсӗ—тискер кашкӑр,
Эпӗ—качака,
Епле санпа варлӑ—
Туслӑ пулам-халь?

— Асту, ҫӑварна хуп,
Шӑлна хытӑ ҫырт!
Лайӑх калаҫар!

— Манӑн виҫӗ путек,
Сӗтӗме ӗҫсе,
Уяв хӗрӗсем пек
Ташлаҫҫӗ вӗҫсе.

— Манӑн та ҫуррӑмсем
Тӗттӗм вӑрманта,—
Аш-какай турамсем
Ыйтаҫҫӗ манран.

— Ҫурусем те санӑн
Юнлӑ-и вара,—
Пурӑнаҫҫӗ-и, ху пек,
Вӑрӑ-хурахла?

— Вӗсем манӑн—хамӑн—
Епле пулсан та!
Выҫӑ вилме памӑп—
Савап вӗсене.

— Манăн путеккĕмсем
Тем пекех хитре,
Çавăнпа савăнса
Ташлаççĕ пўртре.

—Вĕсене те çаплах
Манăн çуррăмсем
Хĕрлĕ шарăх çыхăçĕ,
Мăйĕсенчен çыртса.

— Вĕсен юлташĕсем,
Хĕрлĕ мăйлисем,
Хурçă чĕреллисем,
Тĕнче туллиех.

— Манăн та тусăмсем
Сахал мар, вĕсем:
Упа-утамансем,
Чее тилĕсем.

— Тусусем те санăн
Хупа пĕр майлах,
Çăварĕсем юнлă,
Тискер кăмăллă.

— Вĕсен ăшă çăмлă
Тăлăпĕсемпе
Савăнаççĕ пуян
Купса-улпутсем.

— Вĕсем пурте, сан пек,
Тĕттĕм чăтлăхра
Пурăнаççĕ юнпа
Куççульсем чыхса.

— Асту, каллех эсĕ
Пысăк калаçан,
Мĕнпур юнна ĕçĕп,
Усал качака!..

— Манăн чунтан савнă
Паттăр юлташсем,
Хурçă чĕреллисем,
Тĕнче туллиех.

Пирĕн юна ĕçсе
Пĕтерес çук эс,
Манăн юн çулĕсем—
Вĕри çăлкуççем.

Сан юнлă пуçна
Çапса çĕмĕрсе,
Тирне сӳсе илсе,
Çĕлĕç тумтирсем.

* * *

Авă Хĕрлĕ çăлтăр
Епле çутатать,
Сана ун çулăмĕ
Çапса çухатать,—

Акă тул çуттипе,
Тăван ял çулĕпе
Васук, тĕнче касса,
Таврăнать килне.

Çулпа паттăр утса
Пынă майĕпе,
Калаçаççĕ шăрт-шарт
Çутă аттисем.

Çийĕнче ун—çемçе,
Сăран пиншакĕ,
Çумне çакса янă
Кĕске пăшалне.

Коммунистсен партин
Çĕнтерӳ парни—
Кăкри çинче йăмăх—
Хĕрлĕ çăлтăрĕ.

Хурçăланнă чĕри,
Хĕмленсе çунса,
Ашшĕн тăван килне
Васкать çулăмла.

Тăван ял патнелле
Çывхарнă чухне,
Пĕр хура тĕмеске
Курăнать куçне.

„Халĕ çул çийĕнче
Мĕскер мĕлки вăл!
Мĕшĕлтетет мĕлт-мĕлт,
Тискер мĕлке вĕт?

„Чим-халь, нагана
Аллăма илем.
Кашкăр пек туйăнать—
Пуçĕнчен тĕллем...

„Чу, майраки те пур.
Вĕсем вĕт иккĕн...
Кашкăр качакана
Çаклатнă иккен!..

Акă сана вĕрентем
Качака кӳпме!
Шаплаттарам çапла
Пуçăнтан пульăпа!“

Кашкăр йăваланать,
Качака сикет...
Çакăнпа вара
Юмах та пĕтет.

1935—36.

## ЧĂВАШ ШĂПЧĂКĔ

(К. В. ИВАНОВА)

Санăн ятна ырă сунса,
Паян эпĕр
Тараватлăн уяв туса
Хисеплетпĕр.

Чаплă ĕçне сума-суса
Асăнатпăр,
Хĕрлĕ ялав айне тăрса
Пахалатпăр.

Юратнă халăх ывăлĕ,
Аслă сăвăçă,
Ирĕклĕхĕн çутă çăлĕ
Санăн ĕçÿ.

Путсĕр кулак лачакине
Путса пĕтнĕ
Сетнерпеле Нарспине
Эсĕ чĕртнĕ.

Мул тĕнчиллĕ имсĕр-сĕмсĕр
Саманара
Шăрантарнă эс вилĕмсĕр
Сăвă-юрра.

Паян мĕнпур халăх санпа
Мухтанатпăр,
Сана ăшă сăмахсемпе
Асăнатпăр.

Пĕтĕм чăваш сан ĕçўпе
Хумханатпăр;
Совет Союз хăнисемпе
Уявлатпăр.

Патша тĕнчи чăвашсене
Сума-суман,
Санăн чаплă юррусене
Çут кун паман.

Халĕ санăн юррусем
Ялкăшаççĕ;
Тăван çĕршыв талккишĕпех
Янăраççĕ.

Тăван халăхăн ывăлĕ
Хастар чĕре,
Юрру санăн ĕмĕр юлĕ
Кĕрекере.

Ĕнтĕ пирĕн юрăсем
Çĕнелчĕçĕ;
Сталинла симфонисем
Çĕнтерчĕçĕ.

Халь Сетнерпе Нарсписем
Савăнаççĕ,
Тулăх, ырă пурнăçпа
Пурăнаççĕ.

Ĕçхалăхне чи телейлĕ
Пурнăç патне
Ертсе пырать çĕнтерӳллĕн
Сталин атте.

1940.

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИНЕ АСĂНСА

Тăван поэт тесе,
Хĕпĕртесе,
Сăвă эрешлесе,
Савăнса,
Мĕн сăмах каласа,
Халаласа,
Саншăн, Çеçпĕл Мишши,
Юрлам-ши?

Эсĕ тĕлĕнмелле
Пултаруллă,
Вутлă-хĕмлĕ, çиллĕ,
Тăваллă
Чăваш ĕçхалăхĕн
Хаклă ачи,
Революциллĕ
Поэчĕ.

Юррусем янраççĕ,
Ĕçӳ чаплă,

Сассу аслати пек
Хăватлă,
Епле сана путсĕр
Вилĕм çĕннĕ,
Кунçулна сасартăк
Сÿнтернĕ?!

Кăварлă сăвăçă
Çеçпĕл Мишши,
Мĕн-мĕн кăна эсĕ
Çырмарăн-ши?
Чечеклĕ Украина
Çăвинче
Мĕн чухлĕ юррусем
Çĕрмен-ши?

Уншăн мĕн калас-ха
Манăн сана?
Хаяр пулнă*ун чух
Çапăçу.
Капитал тарçисем,
Сăтăрçăсем
Сан çине çĕлен пек
Пăхнă тек.

Çапах эсĕ мĕнпур
Вăйна хурса,
Чăнлăхпа тÿрĕлĕх
Шыраса,
Тискер—юнлă мула

Большевикла
Çапса çĕмресшĕн
Кĕрешнĕ.

Акă мĕншĕн санăн
Тăпру çинче
Илемлĕ чечексем
Ӳсеççĕ.
Ĕçчен ылттăн хуртсем
Пыл ĕçеççĕ,
Юрла-юрла вĕсем
Вĕçеççĕ.

Эсĕ каланисем
Чăн пулчĕçĕ:
Телейлĕ кунçулсем
Килчĕçĕ.
Санăн тăванусем
Чечекленчĕç,
Чаплă ывăл-хĕрсем
Çитĕнчĕç.

Чăваш поэчĕсем
Сас параççĕ,
Çĕнтерӳ юррисем
Юрлаççĕ.
Паттăр ĕçлекенсем
Савăнаççĕ,

Хаваслă парнесем
Илеççĕ.

Октябрьти аслă
Революцинче
Мухтавлă самана
Çуралчĕ.
Аслă Ленин—Сталин
Тивлетĕнче
Пирĕн тăван çĕршыв
Çуталчĕ.

## ЭЛЬГЕРЕ

(ВĂЛ ЛИТЕРАТУРĂРА ÇИРĔМ ÇУЛ ĔÇЛЕНĔ ЯТПА

Савăн паян, савăн
Семен Эльгер
Салам, хĕрӳ салам
Юбиляр!
Юрла поэт, юрла
Çывăх туссăм,
Юрусем янравлă,
Тăванçăм.

Мухта сăвăç вирлĕ,
Çĕнтерӳллĕ
Социализмлă
Кунçула.
Сталин ялавне
Çӳлерех йăт,
Октябрь çулĕпе
Паттăр ут.

Сывă пул хаваслă

Çĕршыв ачи,
Тăван халăх аслă
Поэчĕ.
Çапла сана туссăм
Ырă сунса,
Юрлатăп чĕререн
Юратса.

Ват çынна кăмăлтан
Сума суса
Çемçе вырăн паран,
Çавăтса.
Асăннă ĕмĕтсем
Çитрĕç, тетĕн,
Чунтан хĕпĕртесе
Пуплетĕн.

Мĕншĕн хĕпĕртес мар?
Халĕ эпĕр
Вилĕмсĕр вĕт ĕмĕр,
Ĕçĕмĕр.
Çĕршыв чечекленчĕ,
Капăрланчĕ.
Тăван искусство
Ешерчĕ.

Аслă Октябрĕн
Çулĕ çинче
Кăвак хуппи пирĕн
Уçăлчĕ.

Ĕçхалăхĕн ячĕ
Çулăмланчĕ.
Телейлĕ кунçул
Туянчĕ.

Савăн паян, савăн,
Эльгер туссăм,
Çĕнтерӳллĕ хастар
Юбиляр.
Сывă пултăр пирĕн
Хĕвелĕмĕр—
Аслă çулпуç Сталин
Аттемĕр.

1941.

## ОРДЕН ИЛНĔ ХЫÇÇĂН

Пуçран лăпкать аслă Çулпуçĕ,
Кăкăр çинче—чыслăх орденĕ,
Ак мĕншĕн хĕрӳ хĕпĕртесе,
Янтăрать юррăм хĕмленсе.

Çупăрлать мана, хĕрӳ савать
Партипеле правительство,
Ĕçĕме чаплăн пахаларĕç,
Хаваслă ятпа чысларĕç.

Халĕ чĕремре ĕç хĕвелĕ
Тата хĕрӳрех çутăлчĕ;
Çĕнтерӳ юррисем юрлас кăмăл
Çуркунне пек йăлкăшрĕ.

Янра, юррăмçăм, янра,
Ĕç çеммисен хăвачĕпе!
Телейлĕ кунçулсем ман умра—
Аслă Сталин тивлечĕпе.

Вăл пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхне
Чĕрĕлĕх паракан çăлкуçĕ,
Коммунизм чаплă çулĕпе
Ертсе пыракан çулпуçĕ.

Вăйсăр çынна хăват парать вăл—
Кĕрешме, çĕнме вĕрентет.
Ĕç паттăрĕсене хаваслă,
Чаплă орденсем парнелет.

Яланах ман пуçăм çийĕнче
Сталин ялавĕ вĕлкĕшет,
Унăн хĕвел пек çутă ячĕ
Ирхи шуçăм пек ялкăшать.

Чĕререн хĕрӳллĕ тав тăвап
Правительствăпа партине,
Тулли кăмăлпа хавхаланап
Хисеплĕ, чыслă парнепе.

Аслă çĕршыв чаплă ĕçĕнче
Мĕнпур хăватпа ĕçлеме,
Сăмах парап халăх умĕнче
Çутă кунçулшăн кĕрешме.

1939.

## КАНУ ÇУРТĔНЧЕ

Панулми пахчисен
Çĕршывĕнче,
Сар кайăк сăввисен
Ăшĕнче—
Хаваслă туйăнать
Çу кунĕнче
Ильинкăра—кану
Çуртĕнче.

Куккуксем автаççĕ
Каçса кайса,
Шăпчăксем юрлаççĕ
Шăхăрса,
Аслă Атăл тăрăх
Пароходсем
Çӳреççĕ чашкăрса,
Ăмăртса.

Сĕтеклĕ çăмри те
Шăпăртатать,

Тырӑ-пулӑсене
Шӑварать;
Кассӑн-кассӑн килсе,
Тӑтӑшланса,
Ярать чĕреслетсе,
Чашлатса.

Ылттӑн сар хĕвел те
Пире питрен
Юратса çупӑрлать
Тўперен.
Вӑрман тулли юрлать,
Музык калать—
Шучĕ те çук вĕт-шак
Кайӑк-кĕшĕк.

Ĕçхалӑхĕн аслӑ
Государствин
Социализмлӑ
Хирĕсенче,
Тинĕс пек хумханса,
Ӑмӑртланса
Ўсеççĕ колхозсен
Тыррисем.

Илемлĕ чечексем
Элĕм-селĕм
Çунатсене сарса
Лараççĕ;
Яштак пўллĕ хитре

Сарă хĕр пек
Куçĕсемпе кулса
Тăраççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв—
Колхоз тĕнчи—
Симĕс пурçăн чаршав
Витĕнчĕ.
Канакан юлташсем,
Колхозниксем,—
Савăнăçлă, тулли
Кăмăллă.

Ушкăн-ушкăн вĕсем
Пухăнаççĕ,
Кĕнеке-хаçатсем
Вулаççĕ.
Хăш-хăш чух пĕрле
Артистсем пек
Вăййсем выляççĕ,
Кулаççĕ.

Çамрăк-кĕрĕмĕсем,
Ывăл-хĕрĕсем,
Купăс умне тăрса,
Пуç тайса,
Тăрăс-тăрăс! сиксе,
Алă çупса,
Çăмăл ташăсене сĕвеççĕ.

Унтах тата вĕсем

Атăл çинче
Кимĕсемпе, хĕвел
Ăшшинче,
Калле-малле каçса,
Хĕпĕртеççĕ,
Уçă сывлăш çăтса
Çӳреççĕ.

Вăхăт-вăхăт кĕсле—
Купăсĕсен
Янăраççĕ хитре
Кĕввисем,—
Колхоз ударниксен,
Стахановецсен
Çĕнтерӳллĕ селĕм
Юррисем:

„... Чăваш ĕçхалăхĕн
Ывăл-хĕрĕн—
Епле савăнас мар
Халь пирĕн?
Ленинла—Сталинла
Кунçулпала
Эпĕр çĕнтерӳллĕ
Орденлă.

Коммунизм тăвас
Ĕçре эпĕр
Стахановла хавас
Ĕçлетпĕр.

Чăваш колхозсемпе
Çул-йĕрĕсен
Паттăр кĕçенеççĕ
Айрисем.

Чăваш çĕршывĕнчех—
Сталин тĕнчи,
Индустри те пире
Пиллерĕ.
Фабрик-заводсем те,
Рудниксем те
Пирĕн çитĕнеççĕ
Халь ĕнтĕ..."

1937. Июнь.

## ÇУЛ КУРКИ

Иртет иккен ĕмĕр, пĕтет кунçул,
Часах курми пулĕç куçĕсем...
Сирĕн умран эпĕ çухалатăп,
Сывă пулăр ĕнтĕ, тусăмсем...
Эх, сăввăмсем... савнă юлташсем.
Епле эпĕ сире юрататăп.
Сирĕн хăватăра шыра-шыра,
Нумай шурă хута хуратрăм.
Ак хăвăртах вилĕм килсе çитĕ,
Часах чĕнми пулĕ чĕлхемçĕм...
Хут çийĕнче анчах тăрса юлĕ
Хура тĕсçĕм, салху мĕлкеçĕм...
Никама хĕрхенмен хăруш вилĕм
Илсе кайĕ сиртен уйăрса.
Темле йывăрлăхсем тўссессĕн те
Чарăнмарăм çырма хĕн курса,
Пурăнăçăм йывăр пулсассăн та
Юррăмсемпе хытă савăнтăм...
Хуйхă çине хуйхă килех тăчĕ,

Шухăшла-шухăшла ывăнтăм...
Выртнă вырăн çинчен тăра-тăра
Çыру çинче лартăм çĕрĕпе,
Темле йывăр хĕнхур курсан та
Пурăнма тăрăшрăм тӳрĕпе;
Хăш-хăш чухне ăшăм çуннипе,
Хăш чух савăннипе юрларăм...
Эх, юррăмсем... савнă юлташăмсем,
Сире чунтан-вартан юратрăм...
Хăш чух шăнкăрчă пек шăрантартăм,
Хăш-хăш чухне юри юптартăм...
Чăн-чăнласа юрлама тытăннă чух
Чисти юхăм шыв пек юхтартăм,
Тăван чĕлхен тăван çырулăхшĕн
Мĕнпур вăйăма хурса ĕçлерĕм...
Кĕнекесем çинчи ăслăлăхсем
Мĕн хушнине хытă итлерĕм,
Вăхăт-вăхăт умри шурă хут çине
Куçран куççуль пăт-пăт тумларĕ...
Ĕçленĕ ĕç ахаль çухалмарĕ,
Куççуль тăкни сая каймарĕ...
Утĕм çĕрте çĕрсе пĕтсессĕн те,
Ятăм çĕрмĕ тесе шанатăп.
Пусмăртан хăтăлнă ĕçхалăхĕ
Çутă курчĕ тесе савăнатăп.
Ĕççыннисен чаплă ĕçне тума
Мĕн вăй çитнĕ таран пулăшрăм...
Чăваш халăх çамрăк çырулăхне

Хăват пама хыт тăрăшрăм.
Мĕскер тăвас тени чăнах пулчĕ,
Мĕн шыранă—çавă тупăнчĕ...
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пулса тăчĕ,
Ĕçхалăхĕ ĕçе йышăнчĕ.
Иртнинче йывăр пулнипелен
Пурăнăçăм хытă юхăнчĕ...
Саркайăк юрри пек сăввăмсене
Юрла-юрлах куçăм хупăнчĕ.
Мана тăпра айне хунă чухне
Куççуль ан юхтарăр хуйхăрса,
Савăнса калаçса юрла-юрла
Çĕрпе витсе хурăр юп курса.

1926.

# IV

# КОЛХОЗЛӐ ЯЛ

## „ПУҪЛАМӖШ“ КОЛХОЗ ЧЛЕНӖСЕНЕ[1]

Сирӗн колхоз ячӗпе
Савӑнатчӗ ман чӗре,
Ялан курас килетчӗ,
Яла пырсан, ман сире.

Патша пур чух сирӗн ял
Тӗттӗм, тискер ятлӑччӗ,
Тарса[2] ҫырми юппинче
Вӑрттӑн ҫӗрте ларатчӗ.

Тухатмӑшсем, юмӑҫсем
Унта асса ҫӳретчӗҫ,
Чӳклемине яланах
Ватӑ мучи чӳклетчӗ.

---

[1] Кунта поэт хӑй суралса ӳснӗ ҫӗршыври (Тутар АССР-чи, Аксу районӗнчи), Ҫӗн-Тимушкел ялӗнчи колхоз ҫинчен ҫырать.

[2] Ҫырма ячӗ.

Киреметсем, йĕрĕхсем
Юнлă йăва тăватчĕç.
Вĕсем хыççăн пупĕ те—
Давай! тесе туллатчĕ.

„Тĕнлĕ“ чăвашсем сире—
Тĕнсĕр! тесе кулатчĕç.
Тĕн сĕрĕмпе пĕр-пĕрне
Тăшман туса хуратчĕç.

Сирĕн ялăн илемлĕ,
Лайăх, паха çĕршывне
Ял укăлчи панченех
Улпут касса илнĕччĕ.

Ун чух улпут тарçисем
Хĕскĕчĕ пек хĕсетчĕç—
Чеепе те, ĕçкĕпе
Чухăн юнне ĕçетчĕç.

Укăлчаран тухсанах,
Выльăхсене хупатчĕç,
Пурлă-çуклă укçана
Тăпăлтарса юлатчĕç.

Хурсене те хупатчĕç,
Укçашăн—хур илетчĕç,—
Вунă хуртан пĕр хурне
Вĕсем пусса çиетчĕç.

Ял çумĕнчех сĕм вăрман
Тискер куçпа пăхатчĕ,—
Çырла-çимĕç сирĕн ял
Сехĕрленсе пухатчĕ.

Хуралçăсем, тĕл пулсан,
Саламатпа çаптарнă—
Куççульсене уншăн та
Çăмăр пекех юхтарнă.

Илсе кайнă пĕтĕмпех
Çырлисене вĕсенне,
Пушă аври касма та
Хăруш пулнă вĕсене.

Çĕлен пекех курăннă
Улпутăн вăрманĕсем,
Вăрман хĕрне пыма та
Сехĕрленнĕ ачисем.

Вăрманĕнче тип йывăç
Çĕрсе тăнă усăсăр,
Юнашарах ялсенче
Шăнса ларнă вутăсăр.

Патша чухне сирĕн ял
Сăн-сăпачĕ çаплаччĕ:
Тĕнсĕр тĕттĕм ятпала
Сире текех хурлатчĕç.

Пӗр Октябрь вучӗ çех
Сирӗн яла çӗнетрӗ—
Пӗрлешӳллӗ, ӑнӑçлӑ
Колхоз ӗçӗ çӗнтерчӗ.

Пӗтӗм Аксу районпех
Ӑна халӗ пӗлеççӗ:
Çӗн-Тимушкел колхозӗ
Паттӑр ӗçлет вӑл, теççӗ.

1937.

## АКСУРА

—„Кунĕн-çĕрĕн тан-тан!..
Ĕмĕтсĕр шуйттан
Те, çăваран тухнă,
Те шывран-шуртан?

Пурăнăç пĕтрĕ пуль
Кивĕ Аксура:
Канлĕх парас çук вăл
Тискер сас-хура.

Пирĕн тарпа пиçнĕ
Апат-çимĕçе
Пĕр ахалех пупсем
Пурăнаç кўпсе.

Урам тулли çўреç,
Хĕрессем йăтса,
Упа пек çухăраç
Çимелли ыйтса.

Ачасем çуралсан,
Пĕлмен ят парса,
Сысна пек çухăраç
Шыва чăмтарса.

Вĕт-шак ачасене
Хăратса, йĕртсе,
Килсеренех çÿреç
Шывпа сирпĕтсе,

Пуп куç—нÿхреп куç,
Тăранма пĕлмест.
Çÿçĕсем те вăрăм,
Ĕмĕтсĕр хырăм.

Вăл мăн хырăмсене,
Чармак куçсене,
Вилли-чĕрри пурте
Сĕткен ĕмĕртет.

Çуралсан—ят хума,
Вилсессĕн—чикме
Чуп вара чиркĕве,
Кĕсйÿне чиксе.

Пурне-çукне пĕлмеç,
Давай! тееç,
Мĕнпур апат-çимĕç
Янтине çиеç.

Чăххи-çăмартине,
Тырри-пуллине,
Тутлă юр-вара
Вĕсене пар вара.

Çăмне, пир аварне
Тата ыттине
Ахаль пар мĕнпурне,
Вĕсем ыйтнине.

Мункун чухне вĕсем
Пушшех чыхаççĕ.
Темчул апат-çимĕç,
Укçа—пухаççĕ.

Хĕрес чуптутарса
Кӳпсе çӳреççĕ;
Хăйсем те чуптуса
Чир-чĕр сараççĕ.

Пире ырă кунçул
Кăтартас çук вăл.
Атя арăм, тарар
Кивĕ Аксуран.—"

Арăмĕ Ăрзие
Хирĕç таварса:
—„Пуçран хăлха иртмест,
Сывă çын вилмест.

Эс ăçта пулатăн—
Эпĕ те унта.
Мĕншĕн сехĕрленсе
Пурăнас кунта?—“

Ăрзин арăмĕ те
Туртăнса тăман,
Ытти килйышĕ те
Хăйĕнчен юлман.

Çемьине илнĕ те
Кивĕ Аксуран
Самар пушă хирне
Пăрахса тарнă.

Унта вăл хăйĕн
Юлташĕсемпе
Хальхи Ăрзи ялне
Пуçласа янă.

Ылттăнпа тĕрленĕ
Аксу планне те
Ăрзи хăйпе пĕрле
Илсе кайнă, тет.

* * *

Халь çĕнĕ Аксура
„Колхозник“ хаçат

Паттăр редакторĕ
Çапла калать:

— Аксу—авалхи ял,
Вăрăм ĕмĕрлĕ;
Нумай кунçулсем вăл
Уй-хир çĕмĕрнĕ.

Пасар вăйлă пулнă,
Чиркĕвĕ, собор...
Пупĕсем яланах
Çинĕ шур çăкăр.

Чухăнсен час-часах
Хури те пĕтнĕ,
Кулаксем ташласа
Юрласа сикнĕ.

Аксу ĕçхалăхне
Ултавçă пупсем
Хура пĕркенчĕкпе
Пурăннă витсе...

Октябрьти аслă
Революци çеç
Кăтартрĕ Аксăва
Çутă пурăнăç.

Халь тĕрлĕ енсемпе
Çитĕнӳсем пур:
Хурçă айăрсемпе
Чупатпăр эпир.

Аксури илемлĕ
Çĕнĕ çуртсене
Ленин лампочки те
Çутатать ĕнтĕ.

Сталинла мухтавлă
Çутă кунçулта
Педшкул та кунта
Çуралчĕ чултан.

Хаçат та хамăрăн
Пур ĕнтĕ пирĕн,
Культура çурчĕ те
Ĕçлет хĕрӳллĕн.

Колхозниксем пурте
Ватти-вĕттипе
Юратса вулаççĕ
Хамăр хаçата.

„Колхозник“ хаçата
Çырăнман çын та
Пирĕн районра
Пит сахал вара.

Паянхи кунсенче
Колхозниксенче
Радио-точка та
Виççĕртен иртнĕ.

Сасси хăватлă ун,
Ялкăшать хумĕ,
Кунĕн-çĕрĕн янрать
Хĕрӳ çулăмĕ.

Вăййисем илемлĕ,
Ĕçĕ вут-хĕмлĕ,
Докладсем те тăвать,
Лекци те вулать.

Спектакльсем вылять
Ĕçхалăхĕшĕн,
Кĕсле-купăс, рояль
Калать вĕсемшĕн.

Хаçат-журналсем те
Вуласа парать,
Тĕнче хыпарсене
Хăвăрт пĕлтерет.

Юнлă мул хуçисен,
Вăрă-хурахсен
Тискер ячĕсене
Тĕплет тĕнчипе.

Хĕрӳ ĕç çинче те
Колхоз хирĕнче
Радио юррипе
Шăранать тĕнче.

Сывлăх çирĕплетме
Вĕренес килсен,—
Физкультур вăййи те
Вылятать куллен.

Вăхăт пĕлме çуртра
Сехет пулмасан,
Ăна та радио
Тĕплĕн калать.

Композитор та вăл,
Артист та пулать.
Чаплă симфонисем,
Музыкăсем вылять.

Юрă-сăвăсемпе
Хаваслăн янрать,
Çулпуçсен сассипе
Хавхалантарать.

Çапла Ленин—Сталин
Ырлăхĕ çинче
Социализмлă
Хаваслă тĕнче.

Кив Аксу ҫӗнелчӗ,
Ҫӗн сӗткен илчӗ,
Сельсоветсем пурте
Телефонланчӗҫ,—

Колхозлӑ-совхозлӑ
Хурҫӑллӑ хӑват
Чаплӑ коммунизмлӑ
Пурӑнӑҫ тӑвать.

# КОЛХОЗРА

(„Хӗрлӗ Сормово“ колхоза пахаласа)

Кӗрекисем тулӑх,
Сӑри лайӑх,
Те сахӑрпа тунӑ,—
Те пылпа?—

*

Сӗтел йӗри-тавра
Хӑна-вӗрле:
Те юрлама пынӑ,
Те курма?

*

Ытарма ҫук хитре
Ывӑл-хӗрӗ
Епле пулма пӗлнӗ
Ҫав тӗрлӗ?

*

Ударникӗ йӑлт-ялт
Сиксе ташлать!

Ватти-вĕтти пурте
Вĕçсе çӳрет.

*

Çĕнтерӳ юррисем,
Такмакĕсем
Шăранаççĕ шăпчăк
Сăвви пек.

*

Оринин колхозĕ
Вăйлă колхоз,
Культурăллă, лайăх,
Хаваслă!

*

Сĕтеллисем тулли
Апат-çимĕç:
Мĕн кăмăла килет—
Ĕç те çи!

*

Типографийĕ те,
Хаçачĕ те,
Сăвăçи те хăйĕн,
Колхозăн!

*

Вăйлă тырă-пулă
Тăвасшăн тек

„Хӗрлӗ Сорм“ паттӑр
Кӗрешет.

*

Социализмлӑ
Саманапа
Хурçӑланнӑ пирӗн
Оринӗн!

1936.

## „ТЕЛЬМАН“ КОЛХОЗНЕ

Мĕнле юрламашкăн,
савăнмашкăн,
Мĕнле тав тумашкăн
пĕлем-ши?

Юратса юррăма
шăрантарма—
Сар кайăк пулам-ши,
шăпчăк-ши?

Сире сума-суса
ырă сунма
Ăçтан сăмах-юмах
тупам-ши?

Эсир савăнмалли
юрă-сăвă
Епле шухăшласа
илем-ши?

Колхозсем те вĕсен,
унти ялсен,
Панулми чечекпе
витĕннĕ.
Çурт-йĕрĕсем вĕсен,
урамĕсем
Ват йăмрасем айне
пытаннă.

Çуракине лайăх
тунă хыççăн
Уявлаççĕ вĕсем
савăнса;
Пурçăн тутрисене
ялкăштарса,
Вĕркĕшеççĕ хĕрĕсем
уявра.

Урамĕсем тӳрĕ,
тап-таса,
Çулĕсем такăр,
тип-тикĕс.
Аслă Октябрĕн
ырлăхпе
Ĕмĕр курман куна
Куратпăр...

Çапла „Тельман" колхоз
ывăл-хĕрĕ

Çĕнтерӳллĕ, хавас,
хĕрӳллĕ.
Еçĕсем ун чаплă,
паттăр, ятлă.
Республикпех паллă
колхоз вăл;

Ленинпа Сталин
çулăмĕпе
Пырать вăл çĕнтерӳ
çулĕпе.

1936.

# V

# ИРТНĔ САМАНА

## ÇĔЛЕН *

Çутçанталăк, çут тĕнче
Çуна-çуна çутăлсан,
Ерипеле сивĕнсе
Тинĕспеле çĕр пулсан,
Тухса выртнă çĕр çине
Çĕр пысăкĕш пĕр çĕлен.
Çĕлен ури пĕртте çук,—
Çĕлен çитмен çĕр те çук;
Çакă çĕрĕн çиййĕнче
Çĕлен сăхман çын та çук.
Çутă хĕвел çутти пек
Вĕçсе çӳрет пĕр кайăк;
Пуçне çĕклет çав çĕлен
Кайăк çине пăхмашкăн.
Çĕлен сăнни çитес çук
Çав кайăка сăхмашкăн,
Çĕлен çине пăхать кайăк

* „Хыпарта" „Тав" тесе çапăннă. Эпĕр кунта Н. И. Шелеби хăй çырнă ятпа кăларатпăр.

Хăйĕн çĕр пин кусĕпе.
Пĕтĕ халĕ пĕрре сĕлен
Ĕмĕрлĕхе пусĕпе.
Çĕлен чĕтресе выртать
Çак кайăкран хăраса,
Кайăк çиçĕм пек çӳрет
Чăнлăх çутти шыраса.
Кайăк çутти кансĕррипе
Çĕлен çĕре кĕринччĕ,
Çак кайăкран хăранипе
Çĕлен çĕрте çĕринччĕ.
Кайăк çӳлтен çĕре ансан
Çĕлен кусне усаймĕ,
Çав кайăкран хăранипе
Выранĕнчен кусаймĕ.
Кайăк чĕри пин пулчĕ,
Çĕлен чĕри çук пулчĕ·
Çĕрпе шывăн пичĕ çине
Мулшăн тăкнă юн тулчĕ.
Кайăк часрах килинччĕ,
Çĕлене вĕлеринччĕ,
Чăн чăнлăха пĕлтерсе
Пире тĕлĕнтеринччĕ.
Юнпа куççуль нумай юхать
Çĕлен çĕрте выртнăран;
Çĕлен ӳчĕ юн юхтарать
Кайăк анса çыртнăран.
Çĕлен пĕрре вилĕ-ха,

Ĕмĕрлĕхе пĕтĕ-ха.
Çĕлен халĕ çĕр çинче
Кунĕн-çĕрĕн юн ĕçет,
Кайăк çĕрĕн вĕçне-хĕрне
Ылттăн çунатпа вĕçет.

## РАҪҪЕЙ

(1905—6 мĕш ҫулта юрланă юрă)

Пирĕн Раҫҫей питĕ пысăк,
Ах анчах!
Вĕҫĕ-хĕрри ун курăнмасть,
Эх тĕнче!
Улпучĕсен хырăмĕсем,
Ах анчах!
Пичĕке пек тулса тăрать,
Эх тĕнче!
Пуҫлăхĕсем, полицисем,
Ах анчах!
Пуҫа ухса ҫех тăраҫҫĕ,
Эх тĕнче!
Куҫĕсене пăхма хăрăн,
Ах анчах!
Ҫĕлен пекех пăхкалаҫҫĕ,
Эх тĕнче!
Аллисенчи саламатсем,
Ах анчах!

Ним айăпсăр çаптараççĕ,
Эх тĕнче!
Кăкрисенче миталĕсем,
Ах анчах!
Йăлтăртатса çех тăраççĕ,
Эх тĕнче!
Йыттисене юратаççĕ,
Ах анчах!
Шур кулачă çитереççĕ,
Эх тĕнче!
Хура халăх питĕ чухăн,
Ах анчах!
Нумайĕшĕ выçă ларать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей тырри-пулли,
Ах анчах!
Ниçта чиксе пĕтерес çук,
Эх тĕнче!
Хулисенче, ялĕсенче,
Ах анчах!
Вĕççĕр-хĕрсĕр ыйткалакан,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей питĕ чаплă,
Ах анчах!
Пĕтĕм çынна тĕлĕнтерет,
Эх тĕнче!
Ĕçхалăхĕн юнĕсене,
Ах анчах!

Сĕлĕх пекех сăхса тăрать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей питĕ пуян,
Ах анчах!
Никам шутне тупаяс çук,
Эх тĕнче!
Хулисенче таварĕсем,
Ах анчах!
Лавкисенче шăнăçмаççĕ,
Эх тĕнче!
Чухăнсем темĕн чухлĕ,
Ах анчах!
Çипуçĕсем çĕтĕк-çатăк,
Эх тĕнче!
Вăрăм çӳçсем чиркӳсенче,
Ах анчах!

Упа пекех çухăраççĕ,
Эх тĕнче!
Виллинчен те, чĕрринчен те,
Ах анчах!
Тăпăлтарса çех илеççĕ,
Эх тĕнче!

Пупĕсемпе тиечуксем,
Ах анчах!
Вăрçа-вăрçа çех пӳлеççĕ,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей шкулĕсенче,
Ах анчах!

Пуянсем çех вĕренеççĕ,
Эх тĕнче!
Хĕресчене, ĕç-çыннине,
Ах анчах!
Ăçта пырсан та çул памаççĕ,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей вăрмансенче,
Ах анчах!
Шучĕ те çук пурлăх çĕрет,
Эх тĕнче!
Хура халăх çурчĕ-йĕрĕ,
Ах анчах!
Хăрăк-марăк тӳнсе тăрать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей питĕ хаяр,
Ах анчах!
Ĕмĕр-ĕмĕр юн юхтарать,
Эх тĕнче!
Тĕрмисенче чăп-туллиех,
Ах анчах!
Аййăпсăр çын асап курать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей çĕршывĕнче,
Ах анчах!
Çăмăр пекех куççуль çăвать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей вăрçă вăрçать,
Ах анчах!

Хисеп те çук тăлăх-турат,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей питĕ тĕттĕм,
Ах анчах!
Пĕтĕм тĕнче кулса тăрать,
Эх тĕнче!
Пирĕн Раççей питĕ пысăк,
Ах анчах!
Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмасть,
Эх тĕнче!
Улпучĕсен хырăмĕсем,
Ах анчах!
Пичĕке пек тулса тăрать,
Эх тĕнче!

## ЧӐВАШ ХӖРАРӐМӖ

Турӑм тиха, турӑм тиха—
Мӑйӑмран хӑмӑт тухмарӗ.
Турӑм ача, турӑм ача,
Аллӑмран ӗҫ каймарӗ.

Чун ыратнӑ енне тухнӑ
Вӗсен ун пек сӑмахсем,
Чӗри вутла ҫуннӑ чухне
Калаҫакан юмахсем.
Вӑл ӗҫпеле ҫуралса,
Ӗҫпех ӳссе ҫитӗнет.
Ӗҫле-ӗҫле кайса ӳксе,
Тӑпра айне витӗнет.
Ури—ача сиктерет ун,
Алли—арлать кӗнчеле,
Ларса канма пӗлмесӗрех
Ирттерет вӑл кунсене.
Хирти-килти мӗнӗпех вӑл
Пур ӗҫе те ӗлкӗрет,
Пурӑнӑҫне юсас тесе
Куҫҫульпелех вӑл йӗрет.

Хĕлĕн-çăвĕн, çĕрĕн-кунĕн
Уйрăлаймасть ĕçĕнчен.
Нумайĕшĕн виличченех
Куççуль типмест куçĕнчен.
Пĕтĕм çемьин çийĕ-пуçĕ—
Унăн алли тăвĕçĕ,—
Хура çĕрпе хупланиччен
Нихçан пĕтмен ун ĕçĕ.
Сухине те сухалать вăл,
Çи-пуçа та питĕрет,
Утине те хăех çулать,
Тыррине те хăй вырать.
Ача-пăча ӳстересшĕн
Пĕтĕм чунтан хуйхăрать.
Çапла чăваш хĕрарăмĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр хĕн курнă.
Çапла патша вăхăтĕнче
Ăна питĕ хĕсĕкчĕ:
Вăрçсассăн та, çапсассăн та
Йĕретчĕ те тӳсетчĕ.
Çӳç вăрăм та, ăсĕ кĕске
Тетчĕç ăна ун чухне.
Выльăх пекех шутлатчĕç
Вăл вăхăтра ун йăхне.
Хăйне тивĕç ят çĕрне те
Паман ăна патшасем.
Чура туса çыхса тăнă
Буржуйсемпе пупĕсем.

Халĕ ĕнтĕ хĕрарăм та
Арçынсемпе тан тăрать.
Совет влаçĕ пулнăранпа
Ун сасси те хыт янрать,
Пĕтĕм Совет Союзĕпех
Халь хĕрарăм ирĕклĕ.
Ăçта тухса çӳресен те
Ун сăмахĕ витĕмлĕ.
Часах чăваш хĕрарăм те
Çутăлтарĕ хăй ятне.
Хулара та, ялсенче те
Кăтартĕ вăл хăватне.

1926.

## ХĂНАРА

Хуньăмăн хăнисем
Вăйлă ĕçрĕç,
Хаваслă юрăсем
Юрларĕç.

Пуринчен ытларах,
Паттăртарах,
Кĕрĕвĕн çăварне
Чысларĕç.

*

Чавка пекех вĕçрĕ
Ханша курки,
Сарлака сĕтелĕн
Тĕлĕпе.

Ӳкичченех ĕçрĕ
Савнă кĕрӳ...
Кайма вăхăт çитрĕ
Киле те,

*

Икĕ арăм ăна
Икĕ хултан
Юпа пек сĕтĕрсе
Тухрĕçĕ...
„Айта, ĕнтĕ, киле
Каяр!“ — тесе,
Вилĕм çуни çине
Хучĕçĕ.

*

Хунĕ панчен кĕрӳ
Çапла карĕ,
Лаши килĕ енне
Ыткăнчĕ;
Микулин чĕрине
Ханша йӳççи
Кăвар пек пĕçертме
Тытăнчĕ.

*

Хăруш сăн-сăпатлă,
Тискер ятлă,
Вут çине пăрахнă
Çĕлен пек,
Авкаланать Микуль,
Пăшăрханать,
Тытса чарма çук вăл
Çуйăхать!

*

„Епле чарас кунăн
Çуйăхнине?
Сысна пекех кӳпнĕ
Ханшине!
Пĕрмаях çавнашкал
Çапкалансан,
Мĕнле пырса кĕрес
Ял çине?!“

*

Акă Тăрна шурне
Килсе çитрĕç...
Хăйсен тăван килне
Кĕчĕçĕ.
Арăмсем иккĕш те
Çуна çинчен
Пăрчăкан пек сиксе
Анчĕçĕ.

*

Анчах пирĕн Микуль
Анмасть халĕ...
Пĕлмест вăл хăй килне
Çитнине.
Сывлăшĕ тăвăлнă,
Куçĕ сӳннĕ...
Çанçурăмĕ пăр пек
Сивĕннĕ,

*

Арăмсем лашине
　　Тăварчĕçĕ...
Микульне вăратма
　　Пычĕçĕ:
„Тăр, тăр, часрах, Микуль,
　　Пӳрте кĕрес...
Çитрĕмĕр вĕт киле“, —
　　Терĕçĕ.

*

Анчах Микуль çаплах
Вăранаймасть, —
Вилĕм çуни çинчен
　　Анаймасть.
Çĕлен сĕлекиллĕ
　　Ханша йӳççи
Хыпса çăтнă унăн
　　Кунçулне.

*

„Чу! сывлăшĕ çук вĕт...
Вилнĕ пулĕ?
Пиртен ĕнтĕ пĕтĕм
　　Ял кулĕ!..
Алли тымарĕ те
　　Тапмасть-çке-ха!
Эх, епле пурнас,
　　Мĕн курас?...“

Çапла сăмахсемпе
Икĕ арăм
Куççулне тăкаççĕ
Ун çине.
Халĕ ĕнтĕ Микуль
Çуйăхаймасть,
Çĕклеймест ĕнтĕ вăл
Чĕлхине.

*

„Мĕскер тума пĕлес,
Ăçта хурас?!
Епле тирпейлесе
Пытарас?!
Эх, аттеçĕм, тетĕп...
Эх, аннеçĕм,
Сирĕн çинче манăн
Ӳпкевçĕм...“

*

— „Пире юратсассăн —
Тĕппи ĕçĕн“, —
Тее-тее, эсĕр,
Ӳсĕртсе,
Çăва тĕпне ятăр
Кĕрĕвĕре...
Тăлăха хăвартăр
Хĕрĕре!“

*

„Хамӑн та сывлӑх ҫук
Ӗҫ патӗнче,
Ачамсем те ҫамрӑк,
Вӗт-шак ҫеҫ.
Пӗтӗмпех ҫын асси
Юлтӑмар вӗт...
Часах выҫӑ вилсе
Пӗтӗпӗр!..“

*

Октябрь пиллӗхӗ
Ҫӗнтерӳллӗ...
Колхоз ывӑл-хӗрӗ
Хӗрӳллӗ.
Социализмлӑ
Кунҫулпала
Ӗҫҫынни кӑмӑлӗ
Ҫуталать.

*

Куллен-кун малалла
Шӑвать кунҫул
Коммунизмӑн чаплӑ
Ҫулӗпе.
Акӑ ӗнтӗ халӗ
Епле юрлать
Паянхи кун Микуль
Матки те:

*

„Патиян-патиян
Пылĕсем пур...
Ăна ĕçе пĕлмен
Çынсем пур...
Ăна ĕçе пĕлмен
Çыннисене
Хăямат çăварĕ —
Çăва пур.

*

Эсĕ те çавнашкал
Пулса, Микуль,
Ыйта-ыйтах ĕçрĕн
Ханшине...
Пĕр арăмпа кăмăл
Çырлахмарĕ,
Тепре илес терĕн
Ман çине.

*

Халĕ ĕнтĕ санăн
Ху çумăнта,
Суккăр Уçуку та
Çук унта...
Халĕ эпĕ кунта
Ачамсемпе —
Хаваслă пурăнап
Ку ялта".

1936 ç., август. Ильинка.

## ВАÇАНКА

Кив Тимушкел ялĕнче
Пĕр Ваçанка пуян пур.
Кирек ăçта пырсан та
Ун умĕнче пур те пур.
Шăрттанĕ те, çăвĕ те
Ун нихçан та татăлмасть,
Çавăнпа та Ваçанка
Пит хăвăртах ватăлмасть.
Нумайĕшĕ ун патне
Эрех чиксех пыраççĕ,
Пÿртне пырса кĕрсенех
Сĕтел çине хураççĕ.
Таçти-таçти „ыр сынсем"
Ана пĕлсе тăраççĕ,
Пĕтĕм Чистай уеспех

Пуян ятне сараççĕ.
Выльăх-чĕрлĕх çурт тулли,
Ик анкарти тырпулли,
Ăçта çÿресессĕн те,
Пулас çук вăл çын кулли.
Ун акнă та, вырнă та,
Пуçтарнă та, çапнă та, —
Тавра ялта пур çынтан
Вăл пуян та, чаплă та.
Тем чул укçи банкăра
Уссе выртать хăй тĕллĕн...
Епле халĕ Ваçанка
Пуйса кайнă вăл тĕрлĕн!
Хăш-хăш улпут çĕрсем те
Ун кăсъине кĕреççĕ.
Хăшĕ ăна йăлăнса
Куççульпелех йĕреççĕ.
Хĕрĕх-аллă çухрăмран
Чул турттарса çурт тăвать,
Ăçтан кăна тухать пуль
Ун çав тĕрлĕ вăй-хăват?
Çил арманĕ çилпеле,
Шыв арманĕ шывпала,
Çĕрĕн-кунĕн кĕрлеççĕ
Унщăн мĕнпур вăйпала;
Ваçанкашăн çын çех мар,
Çилпе шыв та ĕçлеççĕ,
Çавăнпа та çав ăна

Пурте лайăх пĕлеççĕ.
Пур енчен те ырлăхсем
Шыв пек юхса килеççĕ,
Улпутсем те хăш чухне
Унтан кивçен илеççĕ.
Питĕ хытă „пулăшать“
Аптăранă çынсене —
Сĕлĕх пекех сăхать вăл
Чухăнсенĕн юнсене.
Ĕçет хырăм кӳпиччен
Панă чухне ĕçкине,
Илет кăмăл туличчен
Усламĕпе укçине.
Вăхăтĕнче памасан,
Часах сута чĕнтерет;
Муллă çынпа ан тавлаш,
Вăл сана час çĕнтерет.
Ун сĕтелли çийĕнче
Яшка-çăкăр татăлмасть,
Кама çитерсессĕн те,
Ун нимĕн те катăлмасть.
Ĕçкĕпеле нихăçан та
Вăл хăй ăсне çухатмасть,
Ытти пуян çынсем пек
Вĕçкĕнленме юратмасть.
Çынпа вăрçса, тулашса
Паттăрланса çӳремест,
Ĕçлет ĕçне йăвашшăн

Пуйнăçемĕн пуясшăн.
Вăл хĕрхенет çуксене —
Темчул парать укçине;
Илме вăхăт çитсессĕн,
Тин пуçтарать вут çине.

1915.

# ЭССЕПĔ

(Халлап.)

Ĕлĕк-авал пĕр ялта
Пурăннă тет Эссепе,
Пĕтĕм тĕнче халăхне
Тĕлĕнтерсе ăсĕпе.
Ун пĕр пичĕ çийĕнче
Хĕвел тăнă выляса,
Тепĕр пичĕ çийĕнче
Уйăх тăнă çутăлса.
Таçти-таçти халăхсем
Унтан пырса ăс ыйтнă;
Вăл пурне те ăс парса
Хăна туса ăсатнă.
Çил çунатлă çĕленпе
Çӳретчĕ тет вĕçтерсе,
Кашлаттарса-чашкăрса
Йăл-йăл çиçĕм çиçтерсе.
Хăй патшалăх тăрăшне
Чиккине те пĕлмен тет,

Ун пек чаплӑ ӑслӑ ҫын
Ҫӗр ҫинче те пулман тет.
Кӗтӳ-кӗтӳ сурӑхне
Кашкӑрсемех кӗтнӗ тет,
Ҫитес тенӗ ҫӗре вӑл
Ҫиҫӗм пек час ҫитнӗ тет.
Вӑл иртнӗ чух вӑрмансем
Юлатчӗҫ тет кашласа,
Мӗнпур йывӑҫ савӑнса
Ҫын пек сиксе ташласа.
Мӗскер тӑвас тесен те
Вӑл калани пулнӑ тет.
Унӑн выльӑх-чӗрлӗхӗ
Пӗтӗм ҫӗре тулнӑ тет.
Ылттӑн-кӗмӗл тесессӗн
Никам шутне пӗлмен тет.
Вӑл пӗлменни ҫӗр ҫинче
Пӗр япала пулман тет;
Мӗнпур чӗрчун унпала
Калаҫнӑ тет ҫын пекех;
Вӑл пурне те курнӑ тет
Хӑй куҫ умӗнчи пекех;
Унтан мӗнпур патшасем
Сехӗрленсе тӑнӑ тет,
Ҫӗрӗн вӗҫӗ-хӗрринчен
Пуҫҫапмашкӑн пынӑ тет.
Акӑ пӗрре Эссепе
Питӗ ҫутӑ уяр кун,

Хĕртсе хĕвел пăхнă чух,
Шурă юр пек шап-шурă
Виçĕ вĕшле йыттипе,
Урхамахпе, уттипе,
Каять тухса сунара
Ухатара çӳреме,
Вăрман хĕрне çитнĕ чух
Сиксе тухать пĕр пĕлĕт:
Кăвакарса, хуралса,
Кĕмсĕртетсе, кĕрлесе,
Çиçĕм çиçсе, ялтлатса,
Аçа çапса шартлатса,
Пĕтĕм çĕре чĕтретсе,
Ярать çăмăр чреслетсе.
Ентĕркесе, йĕпенсе
Тĕнсе, кӳтсе, шапарса,
Асапланса, ахăрса,
Пырать сĕнксе Эссепе
Хăй ăçтине пĕлмесĕр,
Малалла мĕн пуласса
Асне пилне илмесĕр.
Çав вăхăтра пĕр мулкач
Таçтан сиксе тухать те,
Çăмха кусса кайнă пек,
Сирпĕнет ун умĕнчен.
Эссепен виç вĕшлийĕ
Пĕр-пĕринчен ăмăртса,
Ыткăнаççĕ найлатса.

Эссепе хӑй хыҫалтан,
Вӗшлисенчен юлман та,
Урхамахпе ерripен,
Ним пӗлмесӗр тӗлӗнсе,
Тӗлӗкри пек тӗлленсе,
Пырать чӗп пек хутланса.
Пырсан-пырсан вӑл курать
Пӗр вӗшлийӗн виллине,
Мулкач хыҫҫӑн пынӑ чух
Вилсе ӳксе юлнине.
Шартах сикет ун чӗри
Хӑйне темӗн пулнӑ пек.
Кайсан-кайсан вӑл татах
Курать тепӗр вӗшлине,
Юн ҫиййӗнче пӗр сассӑр
Хусканмасӑр выртнине.
Ах, мӗн пулчӗ-ши, тесе,
Сехӗрленсе хӑраса,
Юлашкине шыраса,
Татах каять малалла.
Татах пӑртак кайсассӑн,
Вӑл виҫҫӗмӗш вӗшлине,
Чӑн юратнӑ йыттине,
Темиҫене татӑлса
Курать вилсе выртнине.
— Ах, эпӗ те пӗтеп пуль
Ку хӑрушӑ ҫул ҫинче,
Мӗн курӗ-ши манӑн пуҫ? —

Тет вăл хăйĕн ăшĕнче.
Усал çапла ман куçа
Мулкач пулса курăнчĕ
Пулĕ тесе хăраса,
Вĕшлисемшĕн кулянса.
Кĕрсе каять малалла,
Сĕм вăрмана, шалалла.
Кĕнĕ çемĕн кĕрет вăл
Çулпа вăрман ăшнелле.
Пырса тухать çап-çутă
Пĕр уçланкă ĕшнене.
Акă унта курать вăл
Хăй ĕмринче курманне,
Çĕр çийĕнче ниçта та
Нихăçан та пулманне.
Тем-тем тĕслĕ чечексем
Вутла çунса тăраççĕ;
Вутăн-хĕмĕн кайăксем
Ытарма çук юрлаççĕ,
Пĕтĕм ĕшне йăлкăшса
Йăлтăртатса курăнать;
Çавă ĕшне варринче,
Çут хĕвел пек çутăлса,
Пĕр ылттăн сурт капланса
Ларать, вăрттăн пытанса.
Ылттăн çурта йĕри-тавра
Тимĕр карта çавăрнă,
Тимĕр карта варринче,

Тимĕр хапхан ик енче,
Ик арăслан выртаççĕ.
Иккĕшне те мăйсенчен,
Тимĕр юпа çумĕнчен
Çыхнă тимĕр сăнчăрпа,
Çăралана çăрапа.
Çиес килет Эссепен,
Нимĕн те çук çимелли:
Ылттăн çурта кĕресчĕ,
Ниçтан çул çук кĕмелли.
Тимĕр хапха патне те
Çывăхарма хăрушă,
Арăслансем ахăрса,
Харăлтатса тăраççĕ.
Ăçта каяс, мĕн тăвас,
Ку пуç мĕскер курĕ-ши?
Çиме те çук, вăй та çук,
Ку чун ăçта тарĕ-ши?
Ылттăн çурта кĕрсен те,
Кĕмесен те, вилмелле,
Мĕн курнă пуç куртăрах.
Унта мĕн пур—пĕлмелле.
Акă ылттăн çурт патне
Урхамахне уттарать.
Хапха патне çитсенех,
Саламатпа çаптарать.
Ик арăслан хушшинчен
Мĕнпур вăйпа сиктерет.

Урхамаха ик енче
Арăслансем хăр та хар!
Харăс сиксе хыпаççĕ,
Шăри-шари çухăрса
Таткаласа çăтаççĕ.
Хăй кĕлте пек ыткăнса
Вĕçсе ÿкет малалла,
Тимĕр карта ăшнелле,
Çурт патнелле, шалалла.
Ак вăл сиксе тăрать те,
Пăлтăр умне пырать те,
Ылттăн алăк хăлăпне
Аллисемпе тытать те,
Шанкăртатса, кĕрлесе,
Пĕтĕм çĕре кисретсе,
Ылттăн алăк хăй тĕллĕн
Ик еннелле уçăлать,
Хĕвел сиксе тухнă пек,
Пăлтăр умĕ йăлтлатса
Йăлтăртатса çутăлать.
Çав вăхăтра ун патне,
Ăна хирĕç вĕлтлетсе,
Шур акăш пек шап шурă
Шурă пурçăн кĕпепе,
Панулми пек хĕп-хĕрлĕ
Хĕресленнĕ пичĕпе,
Çут уйăх пек çутăлса
Тутисемпе йăл кулса,

Сар кайӑк пек сап-сарӑ
Пĕр хĕр сиксе тухать те,
Эссепене аллинчен
Чупса пырса тытать те,
Илсе кĕрет пӳртелле
Хĕрĕх те пĕр хĕр пĕрле
Пуранакан пӳлĕме.
Акӑ унта Эссепе
Тем пек хытӑ тĕлĕнет.
— Эпĕ кунта, ку çурта,
Хӑш тĕнчене килтĕм? тет.
Ылттӑн çуртра чӑп-тулли
Лĕпĕш пек хĕр вĕркĕшет,
Лара-тӑра пĕлмесĕр,
Урлӑ-пирлĕ варкӑшать.
Ăш хĕвел пек хĕм сапса
Тӑраç пичĕ-куçĕсем,
Шур кӑлкан пек çап çутӑ
Йалкӑшаççĕ çӳçĕсем.
Ахах пĕрчи евĕрлĕ
Пурин те куç шӑрçисем;
Йӑл-йӑл кулса тӑраççĕ
Çемçе тутлӑ тутисем.
Хӑлхисенчен хӑлханки
Ылттӑн кĕмĕл ярапи;
Тарай тутри енчĕкĕ,
Йӑлтах пурçӑн шерепи.
Пӳрнисенче чӑп-тулли

Мерчен куçлă çĕррисем,
Кĕпи арки чĕнтĕрсем—
Мăкăнь чечек тĕррисем,
Вырăнĕсем пурин те—
Пăрса тунă пружинран,
Йалт-йăлт сиксе тăраççĕ:
Тĕрлĕ чечек хушшинче,
Çыр кăмпи пек хăпарса,
Тăрать тӳшек-сытарĕ;
Пăхсан мĕлке курăнать—
Çут кĕленче урайĕ.
Ушă юпи çумĕнче
Ĕмĕр сӳнми çуртисем;
Кантăксене пурне те
Карнă шурă чаршавсем;
Сĕтеллисем çиййĕнче
Ĕмĕр курман юр-варсем;
Хăй тĕллĕнех уçăлса
Хупăнаççĕ алăксем;
Вутăн-хĕмĕн çутăлса
Вĕçеççĕ вĕт кайăксем;
Хĕрсен чечен сассипе
Пӳрт купăс пек янăрать.
Антан кайса Эссепе
Сехĕрленсе çех тăрать.
Хĕрĕсем те тĕлĕнсе
Эссепене пăхаççĕ,
Тĕпелелле ирттерме

Ун валли çул уçаççĕ.
Унтан ăна йăвашшăн,
Çу пек çемçен, ачашшăн,
Шăнкăрч чĕлхи сассипе,
Шăпчăк юрри-сăввипе,
Пурте харăс каласа—
Ирт, ирт, кунта, ирт! тесе,
Тĕпелелле ирттерсе,
Хăйне уйрăм пӳлĕме,
Пĕр пĕчченçи хĕр патне
Илсе кĕрсе каяççĕ.
Унта пырса кĕрсенех,
Пӳлĕм алăк хăй тĕллĕн
Пĕтĕм пӳрте янтратса
Шанкăртатса хупăнать.
Эссепепе хĕр анчах
Иккĕн тăрса юлаççĕ,
Салам сунса пĕр-пĕрне
Аллисене параççĕ,
Куçран куça çаврăнса
Ăшшăн-ăшшăн пăхаççĕ;
Унтан вĕсем иккĕшĕ
Тем-тем тĕслĕ апатсем,
Тĕрлĕ ĕçкĕ-çикĕсем
Пĕрле ĕçсе çиеççĕ.
Ĕçсе-çисе тăрансан,
Пĕрне-пĕри юратса,
Ыталаса чуптуса,

Иккӗш выртса ҫывраҫҫӗ.
Ак ылттӑн ҫурт тӑрринчен
Хӗвел тухать ҫӗкленсе,
Хӗвел шевли ӳкнипе
Ҫутӑпала шикленсе,
Леш тӗнчене кайнӑ пек
Тӗлӗк курса тӗлленсе,
Сиксе тӑрать Эссепе.
Сехӗрленсе, тӗлӗнсе,
Ыйхисенчен вӑрансан,
Шур супӑньпе ҫӑвӑнса,
Шур тутӑрпа шӑлӑнса
Тӗрлӗ тутлӑ апатсем
Ӗҫсе-ҫисе савӑнса,
Икӗ ылттӑн тенкелпе
Хире-хирӗҫ лараҫҫӗ,
Тӗрлӗ мирлӗ сӑмахсем
Тин хускатса яраҫҫӗ.

## Х ӗ р

Эссепе, эс ӑсупа
Тӗнчене тӗлӗнтерен,
Хӑватупа, вӑйупа
Пӗтӗм ҫӗре кисретен.
Кала халӗ эс мана:
Мӗн-мӗн куртӑн куҫупа?
Мӗскер-мӗскер уйлатӑн
Шухӑшупа, пуҫупа?

Ĕпле килтĕн эс кунта
Çакă пирĕн хĕр çуртне,
Çут тĕнчере нихçан та
Килсе курман никам та
Хĕрĕх те пĕр хĕр патне?

### Эссепе

Манăн халĕ ăн пĕтнĕ,
Эп нимĕн те пĕлместĕп,
Те тĕлĕкре, те чăнах
Тарап санăн умăнта.
Аçтан килсе ӳкнĕ-ши
Сирĕн пата эп кунта?

### Хĕр

Ку çурт-пирĕн хĕр çурчĕ,
Кунта, качча каймасăр,
Вилнĕ хĕрсен чунĕсем
Ĕмĕр-ĕмĕр тăраççĕ.
Çулла хĕвел ăшшинче
Лĕпĕш пулса вĕçеççĕ,
Мĕнпур хитре чечексен
Пылĕсене ĕçеççĕ.
Тĕнчере мĕн пуррине,
Мĕнле ĕçсем пулнине
Пĕтĕмпеле сисеççĕ.
Çимĕк кунĕ çитсессĕн,
Пурте тухса çӳреççĕ,

Ăçта çитнĕ—вăл тĕлте
Çĕршыв илем кӳреççĕ.
Эп тĕнчери чи чаплă
Асамçă хĕр пулатăп,
Мĕнпур вилнĕ хĕр чунне
Патша пулса тăратăп.
Пĕр асамçă карчăкăн
Эсĕ пĕртен пĕр хĕрне
Пит юратса пурăнан,
Ăна халĕ ху валли
Качча илсе пурнасшăн.
Хĕр пит сана пырасшăн,
Амăшĕ те парасшăн.
Халь эс кунта тăнине
Пĕлсе тăрать вăл карчăк,
Вут çиййĕнчи çĕлен пек,
Ăшаланать вăл саншăн.
Анчах эпĕ унтан та
Хăватлăрах асамçă,
Мана пĕтĕм çĕр çинче
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнĕç,
Мĕскер тăвас тесен те,
Пултаратăп тумашкăн,
Кайăк пек те, çын пек те
Пĕлеп эпĕ пулмашкăн.
Кăмăл турăм эп халĕ
Сана качча пымашкăн,
Ĕмĕр пĕрле савăнса,

Патша пулса тăмашкăн.
Санăн мăшру пуласшăн
Турăм эпĕ ку ĕçе,
Сана хытă юратса,
Çавă хĕртен кĕвĕçсе.
Виçĕ кунтан туйăра
Тăвас тесе тăнă чух,
Эсĕ виçĕ йыттупа,
Урхамахна утланса,
Карăн тухса вăрмана
Ухатара çӳреме.
Акă эп çав вăхăтра
Хура пĕлĕт кăларса,
Аслатипе кĕрлесе,
Тăвăл пулса усалла,
Çиçĕм çиçсе выляса,
Аçа çапса шартлатса,
Пĕтĕм çĕре чĕтретсе
Ятăм çăмăр чреслетсе.
Шанкăр уяр çур куна
Илчĕ тĕттĕм хупласа.
Урхамахна утланса,
Эс пыратăн шапарса,
Ылттăн йĕнер çийĕнче
Чăх чĕппи пек хутланса.
Çав вăхăтра сан ума
Çакă пӳртри пĕр хĕре
Мулкач туса ятăм та,

Йыттусене вăл санне
Виççĕшне те пĕтерчĕ.
Эсĕ килтен тухнийĕ
Паян ĕнтĕ хĕрĕх кун,
Сана халĕ çухатнă,
Пур çĕрте те шыраççĕ;
Тискер кайăк çинĕ пуль
Тесе питĕ хăраççĕ:
Акă пăх-ха кантăкран,
Мĕн куратăн эс унтан.
Вăхăт çитнĕ, Эссепе,
Пире кайма халь кунтан!

Шур чаршавне туртать те
Эссепене пăхтарать.
Пĕр куç уçса хупиччен,
Тĕнчере мĕн пуррине
Пĕтĕмпеле кăтартать
Эссепе пит тĕлĕнет
Епле унăн кил-çурчĕ
Инçе те мар, хĕвел пек,
Йăлтăртатса ларнинчен.
Унтан чаплă туй туса,
Хĕрпе иккĕш пĕрлешеç,
Пурăнаç тет савăнса...

## ÇАРĂМСАНРА

Çарăмсана кам ăмсанмĕ
Унăн чаплă улăхне:
Тем чуль парать ырлăхне,
Çарăмсан çинчи халăхне.

Улăхĕнчен килес килмест
Çĕршывĕсем типсессĕн;
Ырлăхĕсем пĕлĕнеççĕ
Çимĕк кунсем çитсессĕн.

Симĕс пуstav халат пек,
Ешĕл тумтир тăхăнать.
Ырлăхĕсем тĕрлĕрен
Çарăмсан тăрăх пухăнать.

Чечексемпе илемленет,
Пур чĕрĕ чун киленет,
Пĕтĕм çĕршыв илемĕ
Çимĕк çитсен пĕлĕнет.

Хĕвелпеле вăй выляççĕ
Çарăмсанра пуллисем,
Чечексемпе савăнаççĕ
Улăхсенче кÿллисем.

Кайăксем те савăнаççĕ
Пĕр-пĕринпе пĕрлешсе,
Çарăмсан çинче ыр кураççĕ
Тĕрлĕ халăх мирлешсе.

Хур-кăвакалсем савăнаççĕ
Чĕпписемпеле,
Ишсе-чăмса çăвăнаççĕ
Çарăмсан шывпе.

Ывăл-хĕрсем ыталанса
Вăйăсем выляççĕ,
Семçе сассисемпеле
Йăвашшăн кулаççĕ.

Шăрантараççĕ юррисене
Улăхĕсенче,
Йăпатаççĕ пĕрне-пĕри
Çамрăклăхĕнче.

Чечек пăхса тĕр тăваççĕ
Сарă хĕрĕсем,
Хĕвелпеле ялтăраççĕ
Кĕмĕл çĕррисем.

Ҫăвăнаҫҫĕ, тасалаҫҫĕ
Ҫарăмсан шывпе,
Анса-хăпарса киленеҫҫĕ
Ҫӳлĕ тăвĕпе.

Ҫарăмсанăн тăрăшĕпех
Чечек ӳсет тĕрлĕрен,
Пурте вĕсем пулаҫҫĕ,
Тĕнче илем кирлĕрен.

Ăҫтан килчĕ ку ырлăх
Пĕтĕм Ҫарăмсан тăрăшне?
Ҫил хумхатать тинĕс пек
Пĕкĕ ҫӳллĕш ырашне.

Курăк ҫинче сывлăмĕсем
Ҫĕмĕрт сапакисем пек,
Хĕртсе хĕвел пăхнă кун та,
Кăнтăрласăр типмеҫҫĕ.

Лăс пек ҫăваҫ ҫăмрисем
Тырра-пулла ӳстерме...
Пур чĕрчуна ĕҫтерме,
Ҫарансене ешĕрме.

Лăпкă ăшă ҫилĕсем,
Лекет пите ҫу пекех,
Ҫарăмсанăн ырлăхĕ
Пуриншĕн те ту пекех.

Тĕтре çӳрет час-часах,
Кăмписене кăларать,
Çимĕк кунсем çитсессĕн,
Пур ырлăхсем паларать.

Çамрăкĕсем улăха
Уяв тума тухаççĕ,
Савăннипе пĕр-пĕрне
Ăшă куçпа пăхаççĕ.

Алла-аллăн тытăнса,
Сике-сике юрлаççĕ,
Тĕрлĕрен вăй выляса
Кăмăлсене ырлаççĕ.

Пĕрне-пĕри ыталаса
Пыл ĕçмелле выляççĕ.
Вăйăпалах çимĕк кунсем
Хыçалалла юлаççĕ.

Шур кĕписем çиййĕнче
Тĕррийĕсем чечек пек.
Çамрăк сассисемпеле
Чĕвĕлтетеç чĕкеç пек.

Куçран куçа пăхаççĕ
Пуçĕсене ухаççĕ.
Вăййисене курасшăн
Ваттисем те тухаççĕ.

Тухъя-хушпу айёнче
Хĕрарăмсен пуçĕсем,
Вĕсен çинчен каймаççĕ
Каччисенĕн куçĕсем.

Ăçтан тупса çитереççĕ
Юрăсемпе сăвăсем.
Пĕлĕт пекех курăнаççĕ
Çарăмсанăн тăвĕсем.

Каччисенĕн кĕписем те
Арки вĕççем чĕнтĕрлĕ.
Эх, çимĕкĕн илемĕсем
Курăнаççĕ пин тĕрлĕ.

Пĕрне-пĕри чуптăваççĕ
Çемçе тутисемпеле,
Темĕн тĕрлех савăнаççĕ
Çимĕк кунĕсемпеле.

Ăсатаççĕ уявне
Ватти-вĕтти мĕнĕпех,
Асăнаççĕ хĕрхенсе
Иртнĕ çулхи кунсене.

Ялсем тавра çаврăнаççĕ
Харăс утса юрласа,
Уява тухман хĕрсене
Тăрăхласа хурласа.

Шăнкăрав пек сассисем
Янра юлать ял çине,
Пушмак-атă йĕрĕсем
Тăрса юлать çул çине.

Иртрĕ уяв ĕмĕрĕ,
Час çаврăнмĕ каялла,
Улăхсенчен çамрăксем
Саланчĕçĕ ялалла.

Ах, мăнтарăн уявĕ,
Çулталăксăр таврăнмĕ,
Нумай кунсем иртмесĕр
Çĕрĕн тавра çаврăнмĕ.

Вылянтарчĕ вăййипе,
Илештерчĕ пĕр-пĕрне,
Халĕ ĕнтĕ астăвĕç
Пурте савса хăй хирне.

Пуçтарăнса кайĕçĕ
Пуртă йăтса вăрмана,
Еррипеле утăçĕ
Çавасемпе çарана.

Ушкăн-ушкăн кайĕçĕ
Çырла-çĕмĕрт татмашкăн.
Савăнăçлă кунсенче
Пулĕç çуртсен умсенче.

Çĕнĕ милĕк сыхăçĕ
Çанçурăмне çапмашкăн,
Пурте хĕрсе тытăнĕç
Хăйсен ĕçне тумашкăн.

Çуртыррисем çиййĕнчен
Пукрисене суйлăçĕ,
Пурте хăй тырпуллине
Тасатмашкăн уйлĕçĕ.

Улăхсенче, варсенче
Утăсене çулĕçĕ,
Пăри-тулă çиййĕнчен
Пиçенсене çăлĕçĕ.

Еррипе ĕçле-ĕçлех
Таткаланĕç аллисем.
Темĕн тума ваттисем
Тĕреклĕ пулнă авалсем.

Хăва хушшиййĕсенче
Хурлăхансем хуралĕç,
Ятне пĕлсе пĕтерес çук
Хурт-кăпшанкă çуралĕç.

Çерçи пуç пек çырлисем
Курăкпала явăнĕç.
Савăчĕсем çине пăхса
Ачисем те савăнĕç.

Çĕмĕрт сапакисем пулĕç
Тухъя ярапийĕ пек,
Палансемпе чиесем
Мерчен сапакийĕ пек.

Шăналăксем карĕçĕ
Шăна-пăван кĕресрен,
Пурте савăнса ĕçлĕçĕ
Пĕрне-пĕри тименрен.

Пахчисенче ӳсĕçĕ
Çимĕçĕсем тĕрлĕрен,
Пурте вĕсем пулнă-мĕн
Пурăнăçа кирлĕрен.

Сысна çурисем пекех
Хăйарĕсем ӳсĕçĕ,
Сарă çу пек сарăлса
Дынĕсем те пиçĕçĕ.

Тăрна куç пек шывĕсем
Куçа шартса ярĕçĕ,
Çарăмсанăн улăхсем
Хисепсĕр ырлăх парĕçĕ.

Ялĕсем те хула пек:
Çӳре-çӳре ывăнăн,
Епле кăмăл ан савăнтăр
Çарăмсан çинчи ывăлăн.

Ярмăрккипе пасарсенче
Пăтă пекех çын вĕрет—
Вырăс—тутар, чăваш—мăкшă
Пĕр тăван пекех çӳрет.

Вуншар чуллă арманĕсем
Аслати пек кĕрлеççĕ,
Çарăмсанăн ырлăхĕпе
Хуйхисем те сирлеççĕ.

1914.

# АЧАСЕМ ВАЛЛИ

## ТЕЛЕЙЛӖ АЧАСЕМ

Чухӑн та тӑлӑх
Ача-пӑчасем,
Ӗмӗр ҫын хурри
Пулса ӳсетчӗҫ.
Мӗнпур хӗн-хура,
Асапа, хуйха,
Йӗрсе-макӑрса
Вӗсем тӳсетчӗҫ.
Пур хӑрӑк-марӑк,
Ҫӑтӑк-ҫатӑка,
Вӗсен ҫийӗнче
Кураттӑмарччӗ.
Выртса ҫӳрекен
Татӑк-кӗсӗкшӗн,
Килӗрен киле
Ҫӳретчӗҫ вӗсем.
Патша йӗркипе,
Ача-пӑчана
Тӗн сӗрӗмӗпе
Тӗтӗрнӗ унчух.

Халь ĕнтĕ эпĕр
Ирĕк çĕршывра
Ирĕк ӳсетпĕр
Вайă-кулăра.
Утать пионер
Ленин çулĕпе;
Вут çулăмĕ пек
Вĕри чĕреллĕ.
Çыру вулатпăр,
Сăвă калатпăр.
Шевле сикнĕ пек
Вайă вылятпăр.
Ялсенче эпир
Колхоз тыррине
Вăрă-хурахран
Хĕрӳ сыхлатпăр
Тăвас ĕçсене
Лайăх тăватпăр,
Юрăсене те
Шăрантаратпăр.

## ТУМА ПУЛНĂ—ТĂВĂПĂР!

Шурăмпуçĕ çуталчĕ;
Тăрăр часрах, ачамсем,
Кăпăр-капăр тумланăр,
Çăвăр питĕр-куçăра!

Тăрăр, тăрăр хăвăртрах,
Уçăр часрах ыйхăра,
Турткаланса выртас мар
Вырăн çинче ăшăра.

Пурте харăс çĕкленсе,
Хăвăрт сиксе тăрăр та
Çитсе ўкĕр çиçĕм пек
Çут ĕмĕте пурăр та.

Харăс-харăс çĕкленсе,
Кĕрĕс-кĕрĕс сикĕпĕр!
Çитес тенĕ вырăна
Çитме пулнă—çитĕпĕр!

Хăшĕ—çӳлтен вĕçĕпĕр,
Хăшĕ—шывпа ишĕпĕр,
Пĕлĕт ӳснĕ еверлĕ
Сехечĕпе ӳсĕпĕр!

Тума пулнă—тăвăпăр;
Илме пулнă—илĕпĕр,
Пур çĕр çинчи халăха
Пĕрлештерме пĕлĕпĕр!

## ХУРÇĂ ÇУНАТСЕМ

Шупашкарăн çийĕнче,
Аслати пек кĕрлесе,
Хурçă кайăк—ероплан
Вĕçсе çӳрет явăнса.

Атăл хĕрне, шыв çине,
Вăл вĕçсе анса ларать,
Çавра çил пек кĕрлесе.
Шыва çурса çех пырать.

Чĕнсе илет сынсене,—
Унтан, ăшне лартать те,
Илсе каять пĕлĕте,
Вĕçсе çӳрет çиçĕмле.

Пысăк уяв çитнĕ пек,
Халăх Атăл хĕрринче...
Мĕнле ĕмĕт çиçмест-ши
Кашни сынăн чĕринче?

Пĕри вĕçсе курĕччĕ,
Тепри летчик пулĕччĕ—
Çĕршыва вăй кӳрĕччĕ,
Тăшман çулне пӳлĕччĕ.

Айтăр часрах, юлташсем,
Сывлăш флочĕ тумашкăн!
Мĕнпур ватти-вĕттипе
Тăрăшар вăй çитнипе!

## КĂНТĂР ЕНЧИ ÇИЛ

Хĕвел шевли яланах
Йăлтăртатса тăракан,
Çĕршыв çийĕ ĕмĕрех
Вутăн-хĕмĕн курнакан,
Тем пысăккĕш тинĕссем
Пĕр шăнмасăр выртакан—
Хамăн чаплă çĕршывран,
Ырă хыпар калама
Ку çĕршыва килтĕм эп.
Акă часах çуркунне
Кунта килсе çитĕ те,
Унăн вутлă урапи
Вут хыптарĕ пĕлĕте.
Манăн тăван çĕршывра
Çӳлĕ тусен тăррисем
Шурă юрпа витĕнсе,
Пĕлĕт ăшне кĕреççĕ.

Кăвак тинĕс çиййĕнче
Ахах тĕслĕ хумĕсем,
Хĕлне-çуне пĕлмесĕр,
Сив пăр айне пуласса
Асне-писне илмесĕр,
Кĕленче пек çутăлса,
Йăлтăр-ялтăр выляса,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕр-пĕрне
Хăвалаcа çӳреççĕ.
Тем-тем тĕслĕ чечексем
Ялан вутла çунаççĕ,
Тем пысăккĕш пуллисем
Шăмпăр-шампăр чăмаççĕ.
Кайăк сасси яланах

Пин чĕлĕхĕн илтĕнет—
Çавă чаплă çĕршывран
Ку çĕршыва килтĕм эп.
Эпĕ—кăнтăр енчи çил,
Ыр çанталăк сывлăшĕ;
Эп килсессĕн тин килет

Кунта çĕршыв ырлăхĕ.
Çуркуннепе çĕр çинче
Ялан пĕрле çӳретĕп,
Ăçта çитнĕ—вăл тĕлте
Сивве çапса çĕмретĕп.

Вăрманне те, уйне те
Вăрататăп ыйхинчен,
Чĕрчунсене пурне те
Хăтаратăп хуйхинчен.
Шыв-шурсене пĕтĕмпех
Пăр айĕнчен кăларап,
Колхозсене илемлĕ
Ăшă çанталăк парап.

# ÇУРКУННЕ

Акă епле çуркунне!
Хĕвел хытă пĕçерет,
Вут хунă пек шăратса
Сивĕ юра пĕтерет.

Кулса тăнă еверлĕ
Хĕвел пăхать çутăлса;
Тарать куççуль юхтарса
Сивĕ йĕрсе, çухăрса.

Кĕпĕрленсе, кĕрлесе,
Сĕлтĕшленсе, сĕрĕшсе
Çырмасенче пăр каять
Йăлтăр-ялтăр куранса,—

Шăкăлтатса калаçса,
Шăнкăртатса, шавласа,
Пĕрне-пĕри хăваласа
Пыра-пыра капланать.

Эх, çуркунне, çуркунне
Савăнтарать пурне те!
Вут хунă пек çунтарать
Вăл юрне те пăрне те.

Сăртсем, тусем, çеремсем,
Уйсем—колхоз хирĕсем.
Симĕс пустав витĕнсе,
Хатĕрлеççĕ çимĕçсем.

Пур çĕрте те чăр-чăр-чăр,
Кайăк сасси илтĕнет;
Хура вăрман, çеçенхир
Пурçăн чаршав тăхăнать.

## ВĔÇСЕ КИЛЧĔ ÇУРКУННЕ

Аслă чаплă мухтавпа
Вĕçсе килчĕ çуркунне:
Килчĕ çĕршыв юрласси,
Мĕнпур чĕрчун савнасси.

Вăл колхоз хирĕсене
Пĕтĕм чунтан юратать,
Лăпка-лăпка вĕсене
Хĕл ыйхинчен вăратать.

Пирĕн савнă çĕршыва
Чĕрĕлĕх шыв ĕçтерет,
Тĕрлĕ çырла çимĕçпе
Йывăç-курăк ӳстерет.

Усал, тискер кунçулĕ—
Хĕлпе сивĕ çанталăк—
Çур кунĕнчен хăраççĕ,
Тĕттĕм çĕре тараççĕ.

## ÇӲÇЕ

Пур йывăçран маларах
Эп чечеке ларатăп,
Çут пурçăн пек шап-шурă
Шурă кăчăк кăларап.

Хĕл сиввинчен хăраса,
Тĕттĕм çĕрте пурăнса
Халран кайнă пыл хуртне
Малтан эпĕ чĕртетĕп.

„Çитрĕ ăшă çуркунне!
Тутлă сĕткен ĕмĕртеп—
Тух хăвăртрах, ылттăн хурт,
Тĕттĕм шăтăкран!“ тетĕп.

# ШĂНКĂРЧĂ

Кунти тăван çĕршыва
Килтĕм вĕçсе васкаса.
Çуркуннене юратса
Юрла-юрла савăнса.

Çурт тăррине лартăм та
Шăрантартăм сăввăма,
Савăнтартăм, култартăм
Ачасене юррăмпа.

Йăпăрт-йăпăрт йăвана
Кĕре-кĕре пăхатăп,
Ăшă вырăн тумашкăн
Тĕксем, çӳçсем пухатăп.

Унта чĕпĕ кăларсан,
Йăва тăррине ларса,
Татах юрлăп савăнса,
Çунат çапса, шăхăрса.

## УШКĂН ШАНКĂРЧА

Эпир ăшă хыçĕнчен
Ялан вĕçсе çӳретпĕр,
Вăл хăш тĕле çитсен те
Унпа пĕрле çитетпĕр.

Ăшă енчи, ылттăн пек,
Ытарма çук çĕршывран,
Чаплă хĕвел ырлăхпе
Харăс хăпса килтĕмĕр.

Халĕ кунта савăнса
Çунат çапса юрлатпăр,
Сăвă-юрă шăратса
Çуркуннене саватпăр.

Пире кĕтсе ачасем,
Хĕпĕртесе савăнса,
Вăрăм шертĕ тăррине
Хатĕрленĕ йăвасем.

Мĕншĕн пирĕн юрлас мар,
Çавтер хисеп тунăшăн,
Çамрăк-кĕрĕм, ывăл-хĕр
Пире ырлăх суннăшăн.

Колхоз тырри-пуллине
Сиен кӳрекенсене
Пинĕ-пинĕпе эпир
Пĕтеретпĕр хуртсене.

Усал хурт-кăпшанкă çеç
Пире апат-çимĕçсем;
Колхоз хуçалăхĕнче
Эпир паха сăвăçсем.

Пире колхоз ачисем
Çавăнпа пит саваççĕ,
Тем пек хитре йăвасем
Хатĕрлесе хураççĕ.

# ПЫЛ ХУРЧЁСЕН ЮРРИ

Ылттăн çунатпа
Йăл-йăл курăнса
Вĕл-вĕл вĕçетпĕр
Колхоз садĕнче.

Ылттăн çуркунне,
Чаплă çуркунне!..
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!

Хитре чечексен
Пылсене ĕçсе
Пинĕ-пинĕпе
Çӳретпĕр вĕçсе.

Ылттăн çуркунне,
Чипер çуркунне!..
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!

## ХЁВЕЛ ШЕВЛИ

Эпĕ тĕнчере нимĕнрен те
Хăрамастăп нихăçан та!
Хуйхă-суйхă кунсене
Çунтаратăп çулăмпа;
Усал сивĕ хăватне
Часах çапса çĕмĕреп.
Юрă-сăвă сассипе
Пĕтĕм çĕре тултарап,
Хĕлпе сивĕ хăватне
Вут хунă пек çунтарап.
Çĕр чăмăрĕ çийĕнче
Пур енне те çутатап,
Юра-пăра хăвăртах
Ку çĕршывран çухатап.
Колхозниксен уй-хирне
Тĕрлĕ çимĕç тултарап,
Колхоз ывăль-хĕрсене
Савăнтарап, култарап.

## ТĂРИ ЮРРИ

Колхозниксем акара,
Эпĕ вĕсен тĕлĕнче
Çунат çапса юрлатăп—
Чăрăлтатать çут тĕнче!
Çу шăраннă евĕрлĕ
Шăрантарап сăввăма,
Савăнтарап сассăмпа.

## КУРĂК

Пĕтĕм çĕршыв илемне
Эпĕ кӳрсе пурăнап,
Симĕс пурçăн евĕрлĕ
Вутăн-хĕмĕн курăнап.

Симĕс пустав çитĕпе
Витсе тăрап эп çĕре,
Кунĕн-çĕрĕн чăр-та-чар!—
Кайăк сасси ман çире.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Тăрик-тăрик тăрнисем—
Янăраса тăраççĕ
Тĕрлĕ кайăк юррисем.

Хам çуратнă ача пек
Кайăксене сыхлатăп,
Ырă уçă сывлăшпа
Эп вĕсене сывлатап.

Эп пулмасан ҫӗр ҫинче
Чечексем те пулмӗччӗҫ,
Колхозниксен нӳхрепӗсем
Сӗт-ҫупала тулмӗччӗҫ.

Колхоз выльăх-чӗрлӗхне
Тăрăс-тăрăс сиктереп,
Колхозниксен кил-йышне
Тутлă апат ҫитереп.

# ЧĔКЕÇ

Вĕçĕ-хĕррисĕр
Тинĕссем урлă,
Çисĕм çиçнĕ пек
Вĕçсе килтĕм эп.
Эпĕ вĕçнине
Сывлăш та сисмест,
Хамăн çиййĕмри
Тĕкĕм те сикмест.
Ăнсăртран пӳрте
Вĕçсе кĕрсессĕн,
Манăн пуçăма
Сар-çу сĕреççĕ:
„Çăвару—çу сан,
Туту—пыл“, теççĕ.
Манăн сăввăма,
Сăн-сăпатăма
Колхоз ачисем
Тем пек саваççĕ.

## ПАНУЛМИ ЧЕЧЕКĔ

Юлташăмсем, тусăмсем,
Çуркуннехи илемсем,
Çĕр çиййĕнче ўсекен
Йăвăç-курăк, чечексем,
Ман çиййĕме пăхăр-ха!
Пурçăн чаршав витнĕ пек
Витрĕм улма йывăçне,
Чечек айне хăвартăм
Чаплă шăпчăк сăвăçне.
Пĕтĕм колхоз сачсене
Ырă шăршă тултартăм,
Мĕнпур ачи-пăчине
Тутлă улма çитерĕп.

# ШĂПЧĂК

Мухтанмастăп, вĕçместĕп
Хитре тесе сăнăмпа;
Иртен-çӳрен çынсене
Тĕлĕнтерeп сăввăмпа.

Эп юрлама тытăнсан
Сар кайăк та вăтанать,
Йăвăç çулçи хушшине
Тĕттĕм çĕре пытанать.

Колхоз ывăль-хĕрĕсен
Эп чăн чаплă сăвăçи;
Тинĕс хум пек хумханать
Ман сасăпа йывăççи.

## САРКАЙĂК

Тĕкĕм-çӳçĕм сап-сарă,
Сар чечек пек курăнать;
Юрăмпала, сăввăмпа
Çутçанталăк шăранать.

Манăн саспа сĕм вăрман
Пĕр киленсе янăрать,
Чаплă юрă-сăвăра
Уяври хал туйăнать.

Юрласшăнах ăмăртса
Ку çĕршыва килетĕп,
Колхозсемпе савăнса
Пушшех чаплă юрлатăп.

Çĕр сывăрма пĕлмесĕр
Ударнике мухтатăп,
Стаханов пек çынсене
Паттăрсене саватăп.

# ХĔВЕЛÇАВРĂНĂШ

Эп çуркунне ырлăхпе
Часах ӳссе çитĕнеп,
Темĕн чухлĕ сип-симĕс
Çунатсемпе витĕнеп.
Сар пурçăн пек курăнса,
Ларап çилпе силленсе,
Ялан хĕвел еннелле
Савса пăхса киленсе.
Мухтав сана, çуркунне,
Тав тăватăп савăнса,
Пĕтĕм чунтан-чĕререн
Пуçа тайса, авăнса.

## ПЫЛ ХУРЧĔ

Пин-пинĕпе пĕрлешсе
Коммунпала пурнатпăр,
Ĕмĕр пĕрле ĕçлесе
Пĕрле ĕçсе-çиетпĕр.

Килĕштерсе пурăнма
Питĕ лайăх пĕлетпĕр!
Мĕн пур хитре чечекрен
Пылĕсене илетпĕр.

Усал хĕлпе сивĕрен
Эпир питĕ хăратпăр,
Тĕттĕм çĕре пытанса
Сехĕрленсе тăратпăр.

Çуркунне çеç хĕрхенсе
Пире çутта кăларать,
Хăруш усал вилĕмрен
Пĕр вăл анчах хăтарать.

Вăл килсессĕн, савăнса,
Чечек çине саланса,
Çăвĕпеле пыл йăтса
Пурăнатпăр юрласа.

Пирĕн пылтан тутлийĕ
Мĕнех пур-ши тĕнчере,
Ăна çиме тытăнсан
Çăтса ярăн чĕлхӳне.

Халĕ колхоз çемьине
Пылпа хăна тăватпăр,
Хамăр пекех пĕрлешсе
Ĕçленĕшĕн саватпăр.

## ХĔВЕЛЕ ÇИТЕХ

Юрă сассисем,
Купăс сассисем,
Пĕтĕм çĕр çинче
Кĕрлесе тăрăр!

Кĕрлеччĕр вĕсем,
Çутçанталăкра
Тинĕс хумĕ пек
Ишсе çÿреччĕр!

Хĕвел патне те
Çитсе çапăнччăр!
Çынсене пĕрмай
Малалла чĕнччĕр!

Пусмăрлăх, асап
Тĕнчипех пĕтчĕр,
Колхоз çĕршыва
Телейпе виттĕр!

## ТУПМАЛЛИ:

*Стр.*

Чăваш сăвви . . . . . . . . . . . . . . . 5

ÇУЛПУÇСЕНЕ

Ленин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Аслă Ленин . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Ленин шухăшĕ . . . . . . . . . . . . . . 14
Сталин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Сталина . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18

ÇĔНТЕРӲ ЮРРИСЕМ

Ылттăн саспаллипе . . . . . . . . . . . 23
Хĕвеллĕ Май . . . . . . . . . . . . . . . 25
Хĕрлĕ Çар кунĕ . . . . . . . . . . . . . 27
Тăвансем . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Республикçĕм, савăн . . . . . . . . . . 36
Манăн сăмах . . . . . . . . . . . . . . . 41
Çĕнтерӳ юрри . . . . . . . . . . . . . . 46
Автономи юрри . . . . . . . . . . . . . 52

СУМА СУСА

Максим Горькие . . . . . . . . . . . . 75
Чăваш шăпчăкĕ . . . . . . . . . . . . . 98
Çеçпĕл Мишшине . . . . . . . . . . . . 101

Эльгере . . . . . . . . . . . . . . . . . 105
Орден илнĕ хыççăн . . . . . . . . . . 108
Кану çуртĕнче . . . . . . . . . . . . 110
Çул курки . . . . . . . . . . . . . . 115

КОЛХОЗЛĂ ЯЛ

„Пуçламĕш“ колхоз членĕсене . . . . . . 121
Аксура . . . . . . . . . . . . . . . . 125
Колхозра . . . . . . . . . . . . . . . 134
„Тельман“ колхозне . . . . . . . . . . 137

ИРТНĔ САМАНА

Çĕлен . . . . . . . . . . . . . . . . 143
Раççей . . . . . . . . . . . . . . . . 146
Чăваш хĕрарăмĕ . . . . . . . . . . . . 151
Хăнара . . . . . . . . . . . . . . . . 154
Ваçанка . . . . . . . . . . . . . . . . 161
Эссепе . . . . . . . . . . . . . . . . 165
Çарăмсапра . . . . . . . . . . . . . . 180

АЧАСЕМ ВАЛЛИ

Телейлĕ ачасем . . . . . . . . . . . . 191
Тума пулнă—тăвăпăр . . . . . . . . . 193
Хурçă çунатсем . . . . . . . . . . . . 195
Кăнтăр енчи çил . . . . . . . . . . . 197
Çуркунне . . . . . . . . . . . . . . . 200
Вĕçсе килчĕ çуркунне . . . . . . . . . 202
Çўçе . . . . . . . . . . . . . . . . . 203
Шăнкăрчă . . . . . . . . . . . . . . . 204
Ушкăн шăнкăрчă . . . . . . . . . . . . 205

Пыл хурчĕсен юрри . . . . . . . . . . . . . 207
Хĕвел шевли . . . . . . . . . . . . . . . 208
Тăри юрри . . . . . . . . . . . . . . . 209
Курăк . . . . . . . . . . . . . . . . . 210
Чĕкеç . . . . . . . . . . . . . . . . . 212
Папулми чечекĕ . . . . . . . . . . . . . 213
Шăпчăк . . . . . . . . . . . . . . . . 214
Саркайăк . . . . . . . . . . . . . . . 215
Хĕвелçаврăнăш . . . . . . . . . . . . . 216
Пыл хурчĕ . . . . . . . . . . . . . . . 217
Хĕвеле çитех . . . . . . . . . . . . . . 219

ЧУВАШ... КАЯ
КНИ...
г. Че...

Редактор Стихван Шавлы

Подписано к печати 18/IV-41 г. Печатных листов 7.
7,3 уч. авт. л. Тираж 3000 экз. НТ 2653
Заказ № 209.

Отпечатано в тип. № 1 Управл. изд. и полиграфии
при СНК ЧАССР, г. Чебоксары.

Цена 4 р. 50 к.

Н. И. ШЕЛЕБИ

# СТИХИ И ПЕСНИ

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1 9 4 1